им. М. Горького

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Апрель
28
ЫТЛАРИКУН
№ 84 (8993)
36-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Совет Союзĕнчи ĕççыннисем! Рабочи класпа колхоз хресченĕсем хушшинчи никам çĕмĕреймин союза, пирĕн çĕршыври халăхсем хушшинчи туслăха тăванла тĕреклетĕр! Нумай нацийлĕ аслă Совет государствин пĕрлĕхне ывăнма пĕлмесĕр çирĕплетĕр!

(КПСС Центральнăй Комитечĕ Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе чĕнсе каланисенчен).

Çуракине хăвăрт, агротехника тĕлĕшĕнчен лайăх ирттерер

Республикăри чылай колхозсемпе машина-трактор станцийĕсем çуртрисем акма тытăнчĕç. Çуракине хăвăрт, агротехника тĕлĕшĕнчен лайăх ирттересси — партипе совет тата ялхуçалăх органĕсен паянхи чи ответлă задачи пулса тăрать.

Уй-хирти çурхи ĕçсене пур çĕрте те массăллăн тытăнма вăхăт çитнĕ. Хăшпĕр ĕçсене тумалли паха срoксем иртсе пыраççĕ. Апла пулин те нумай районсемпе МТС-сен тата колхозсен руководителĕсем уй-хирти çурхи ĕçсене кая хăварса пыраççĕ.

Кăçал тăпрара нÿрĕ нумай пулни çинчен пурте кăмăллăн калаçаççĕ, анчах çав нÿрĕпе тырпул тухăçлăхне ÿстерес ĕçре ытларах усă курма тимлĕн тăрăшни чылай çĕрте курăнмасть. Тăпрари нÿрĕ нумайтарах сыхланса юлтăр тесен, кĕркунне сухаланă уйсене хăвăртрах сÿрелемелле тата культиваци тумалла. Анчах çак ĕçсем чăтма çук юлса пыраççĕ.

Кĕрхи калчасене сÿрелени те тырпул тухăçлăхне ÿстермелли паха майсенчен пĕри пулса тăрать. Калчасене сÿрелемен пусă пĕр колхозра та пулмалла мар. Ку ĕçе ялхуçалăх специалисчĕсен организацилесе пымалла тата тĕрĕслесе тăмалла. Анчах вĕсем чылайăшĕ агротехникăлла çак пысăк ĕçе вăхăтра тума тивĕçлипе тăрăшмаççĕ, Пăрачкав, Улатăр, Хĕрлĕ Чутай, Тăвай тата ытти районсенчи колхозсенче кĕрхи калчасене апрелĕн 25-мĕшĕ тĕлне те сÿрелеме тытăнманни çавăн çинчен калать те ĕнтĕ. Уй-хирти çурхи ытти ĕçсене те вăхăтра туса ирттермелле, унтан — тĕштырăсене, техникăлла культурăсене, тымарçимĕçпе пахча çимĕçсене, çавăн пекех ытти культурăсене кашниех агротехника кăтартса панă чи лайăх срокра акса хăвармалла. Тăпрари çурхи нÿрре упраса хăварас тесе, халĕ кашни колхозрах мĕнпур тракторсемпе, лашасемпе туллин усă курмалла. Тăпрари нÿре сыхласа хăварассишĕн кĕрешни вăл — тырпул тухăçлăхне ÿстерессишĕн кĕрешни пулать.

Калчасене вырăнти тата минераллă удобренисем сапса пани тырпул тухăçлăхне ÿстерме мĕн тери пулăшнине колхозниксем хăйсен опычĕнчен аван курчĕç. Агротехникăлла çак пысăк ĕçе пур колхозсенче те анлăн туса пыни кирлĕ. Калчасене удобрени сапса пама çирĕплетнĕ план кашни колхозшăн, районшăн закон пулса тăрать. Ăна пăсма никама та ирĕк памалла мар. Çапах та уйрăм районсем кĕрхи калчасем çине удобренисем сапас ĕçе хакламаççĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Элĕк районĕ палăрса тăрать. Çак районти колхозсем апрелĕн 25-мĕшĕ тĕлне района панă плана 29 процент ытларах кăна тултарнă. Сĕнтĕр районĕ пирки те çавнах калас пулать. Ишлей районĕ кĕрхи калчасене апат памалли плана 127 процент ытларах тултарнă пулсан, Сĕнтĕр районĕ вара планăн виçĕ пайĕнчен икĕ пайне кăна тултарнă. Кĕрхи калчасене удобренисем сапса апат памалли плана çак кунсенчех кашни колхоз тăрăх тултарас пулать.

Чылай районсемпе МТС-сен тата колхозсен руководителĕсем ака-суха ĕçне кая хăварса пыраççĕ. Сăмахран, нумай çул ÿсекен курăксем акмалли чи лайăх срок иртсе пырать, анчах чылай колхозсем ку ĕçе чăтма çук вăраха ячĕç. Улатăр районĕ апрелĕн 25-мĕшĕ тĕлне мĕн пурĕ те 65 гектар кăна акнă. Чылай районсенче нумай çул ÿсекен курăксене алăпа акаççĕ.

Кăçалхи çуракинче агротехникăна пăсни пачах пулмалла мар. Республикăри колхозсемпе МТС-сен пĕтĕм культурăсене вăхăтра тата агротехника хушнă пек акса хăварма çĕнĕ йышши техника çителĕклĕ. Техникăпа тухăçлă усă курни ĕçĕн хăвăртлăхне ÿстерме кăна мар, ака-сухари пĕтĕм ĕçсен пахалăхне çÿлĕ шая çĕклеме кирлĕ. Уйрăм районсенче вара, сăмахран, Калинино, Канаш, Октябрьски, Ишлей, Чурачăк районĕсенчи колхозсенче техникăпа начар усă кураççĕ. Кунта ăшăх сухалаççĕ, вăрлăха яровизацилемесĕр тата имçамсемпе чÿхемесĕрех сÿре айне алăпа акаççĕ, кĕрхи çĕртме сухине сÿрелемелли тата культиваци тумалли срoксене пăсаççĕ. Хăшпĕр колхозсенче вăрлăха кирлĕ пек хатĕрлемеççĕ, çавна пула кондицие ларман вăрлăх акнă тĕслĕхсем те тĕл пулаççĕ.

Сураки хăвăртлăхĕ тата ака-суха ĕçĕн пахалăхĕ пĕтĕмпех МТС-сенчен килет тесен те юрать. Уй-хирти ĕçсен пысăк пайне кăçал вĕсен вăйĕпе туса ирттермелле. Çапах та Чăваш АССР Ялхуçалăх министерстви кирлĕ пек ертсе пымасть пирки, мĕнпур машинăсемпе ĕçлеме халĕ те тытăнман-ха. Чылай çĕрте тракторсемпе икĕ сменăпа ĕçлемеççĕ, сменăри нормăсене тултармаççĕ. Çуракине тытăннă-тытăнманах уйрăм тракторсем, вĕсене тата кăкарса ĕçлемелли машинăсене начар юсанă пирки, ахаль тăраççĕ. Тракторсемпе уйрăмах каçхи сменăсенче начар ĕçлеççĕ, брак тăваççĕ, горючи ытлашши пĕтереççĕ. Çак çитменлĕхсем колхозсен айăпĕпе те нумай пулаççĕ. Вĕсем трактор бригадисем валли вăхăтра вăрлăх, шыв турттарса памаççĕ, бригадăсенче ĕçлеме кирлĕ чухлĕ çынсем уйăрмаççĕ.

Çуракине ирттерес ĕçре халĕ палăрнă çитменлĕхсене хăвăрт пĕтересси, çав çитменлĕхсем малашне пуласран сыхланасси ялхуçалăх органĕсен пирвайхи тивĕçĕ пулса тăрать. Ака-суха ĕçĕсене хăвăртлатма, çуртрисене агротехника кăтартнă чи лайăх срокра акса хăварма партипе совет органĕсен те мĕн кирлине пĕтĕмпех тăвас пулать. Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен паха опычĕпе усă курса, çуртрисене ансăр ретпе тата хĕреслĕ майпа акмалла, гранулированнăй удобренисемпе ытларах усă курмалла, агротехникăлла ытти ĕçсене те çирĕп пурнăçласа пымалла.

Çуракинче ĕçе тĕрĕс организацилесси çине уйрăмах тимлĕ пăхас пулать. Тракторсемпе тата колхозри туртăм вăйĕпе тухăçлă усă курни кирлĕ. Кашни тракторпа икĕ смена ĕçлемелле, сменăри нормăсене яланах ирттерсе тултармалла. Колхозсен трактор бригадисене тухăçлă ĕçлеме лайăх майсем туса памалла. МТС-па колхоз хушшинче тунă договор икĕ енĕшĕн те çирĕп закон пулса тăмалла, икĕ енĕн те договорта палăртнă обязательствăсене чыслăн пурнăçласа пымалла. Ака-суха ĕçне хутшăннă кашни колхозник кулленхи нормăна тултарса пытăр. Колхоз председателĕсен, бригадирсен трактористсемпе колхозниксем тунă ĕçе тĕплĕн тĕрĕслесе çиеленчех йышăнас пулать.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Чăваш обкомĕн бюровĕ, çуракине хăвăрт тата агротехника тĕлĕшĕнчен лайăх ирттермелле тăвас тесе, тивĕçлĕ решени йышăнчĕ. Партин вырăнти организацийĕсен, çавăн пекех советсемпе ялхуçалăх органĕсен çуракине организацилесе ертсе пырассине тĕпренех лайăхлатас пулать.

Çуракинче ĕç ăнăçлă пуласси çынсенчен килнине манма юрамасть. МТС директорĕсен, колхоз правленийĕсен уй-хирте кашни тракторист, кашни колхозник кулленех тухăçлă ĕçлеме пултартăр тесе тăрăшмалла. Парти организацийĕсен хăйсен массăлла-политикăлла ĕçне уй-хир тата трактор бригадисенче туса пымалла. Коммунистсемпе комсомолецсен, нумай йышлă агитаторсен производствăра хăйсен паха тĕслĕх кăтартса, колхозлă ял ĕçченĕсене тухăçлă ĕçлеме хавхалантарса пымалла. Массăлла-политикăлла пĕтĕм ĕçе колхозниксене производствăри дисциплинăна çирĕп тытса пыма, пĕтĕм ĕçе тĕплĕн тума, çуракине хăвăрт тата агротехника тĕлĕшĕнчен лайăх ирттерме мобилизацилес тĕллевпе туса пырас пулать. Колхозниксемпе трактористсен пăлапа культурăлла ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçе те манăçа хăвармалла мар.

Партин Центральнăй Комитечĕ Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе çапла чĕнсе каларĕ:

Социализмла çĕрçĕпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри работниксем! Мĕнпур ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне малалла ÿстерсе пырассишĕн, общественăлла выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне ÿстерессишĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешĕр! Çĕршывра ялхуçалăх продукчĕсем питĕ нумай пулмалла тăвар!

Çуракине хăвăрт тата лайăх ирттерни парти чĕнĕвне ĕçпе ответлени пулать. Пирĕн республика хамăрпа кÿршĕллĕ тăван республикăсемпе — Мордва тата Мари республикисемпе социализмла ăмăртăва тухса, пысăк обязательствăсем йышăнчĕ. Çав обязательствăсене чыслăн пурнăçлани пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхăн виççĕмĕш çулĕнче пирĕн республика умĕнче тăракан задачăсене ăнăçлăн татса пама пулăшать.

Çĕршыври уй-хирсенче

Ростов облаçĕнчи тĕштырă акса тăвакан 30 район ытла ир акакан тĕштырăсене акса пĕтернĕ. Çуракине иртнĕ çулхинчен хăвăртрах ирттернĕ.

Тури Дон тăрăхĕнче — Воронеж тата Сталинград облаçĕсен чиккинче хĕрсех çураки тăваççĕ.

Курск облаçĕнче нумай çул ÿсекен курăксем акаççĕ. Медведенка районĕнче клевер, эспарцет тата люцерна 4,260 гектар акнă, ку вăл задание икĕ хут ытларах пулать. Нумай колхозсенче икĕ тĕрлĕ е виçĕ тĕрлĕ курăксен вăрлăхĕсене хутăштарса акаççĕ.

Коми-Пермяк наци округĕнче те çураки ĕçĕ анлăн саралнă:

Рязань облаçĕнчи Каверин районĕнчи колхозсем ир пулакан çĕрулми лартма тытăннă. Çĕрулмине лайăх çемçетсе хатĕрленĕ çĕр çине лартаççĕ.

Апрелĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС).

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обкомĕн бюровĕнче

Республикăри колхозсенче çурхи уй-хир ĕçĕсене ирттернĕ çĕрти çитменлĕхсем çинчен

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обкомĕн бюровĕ республикăри колхозсенче çурхи уй-хир ĕçĕсене организацилесе ирттерес тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртнă. Районсен, МТС-семпе колхозсен руководителĕсем, лайăх условисем пур пулин те, çурхи уй-хир ĕçĕсене вăраххăн туса пыраççĕ, нумай çул ÿсекен курăксем акмалли, кĕрхи тырă калчисене апат памалли тата сÿрелемелли, акас умĕн тăпрана сухаласа çемçетмелли тата ир акакан çурхи культурăсем акмалли чи лайăх срoксене ирттерсе яраççĕ. Улатăр, Вăрмар, Кувакино, Советски, Пăрачкав, Çĕрпÿ тата Çĕмĕрле районĕсенчи нумай колхозсем апрелĕн 25-мĕшĕ тĕлне нумай çул ÿсекен курăксем акма тытăнман, кĕрхи тырăсен калчине апат парас тата сÿрелес ĕçе çителĕксĕр туса пыраççĕ.

Машина-трактор станцисен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. Нумай тракторсемпе уй-хирсенче ĕçлеме тытăнман-ха. Чылай МТС-сенче тракторсене икĕ сменăпа ĕçлеттерессине организацилемен, трактористсенчен чылайăшĕ сменăри нормăсене тултармаççĕ. Трактор бригадисенче машинăсене техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăрассине çителĕксĕр организациленĕ пирки, тракторсем юсавсăррине пула нумай ахаль лараççĕ, ĕçре брак тăваççĕ, нормăран ытла горючи пĕтереççĕ. Чылай çĕрте колхозсем трактор бригадисене япăх пулăшаççĕ: трактор бригадисем валли горючи, шыв тата вăрлăх вăхăтра турттарса памаççĕ, прицепщиксем уйăрса памаççĕ, çуракинче ĕçлекен механизаторсем валли кирлĕ условисем туса паман.

Шăхасан, Калинино, Ишлей, Чурачăк районĕсенчи чылай колхозсенче агротехникăна хытă пăснисем пур—ăшăх сухалаççĕ, кĕрхи çĕртме тунă участоксене сÿрелеме тата культиваци тума кая юлса тытăнаççĕ, алăпа акаççĕ, кондицие ларман, вутпуççинчен тасатман тата яровизацилемен вăрлăх акаççĕ. Районсенчи ялхуçалăх пайĕсем, МТС директорĕсем тата нумай колхозсен председателĕсем агротехникăна хытă пăснă фактсем çине çаврăнса пăхмаççĕ, трактор бригадисемпе уй-хир бригадисен ĕçĕсене пахалăх тĕлĕшĕнчен мĕнле тунине тăтăшах тĕрĕслесе тăмаççĕ.

Нумай колхозсенче çурхи ака ĕçĕсене тунă çĕрте чĕрĕ туртăм вăйĕпе начар усă кураççĕ, колхозниксен ĕçне организацилес тата шута илес тĕлĕшре те пысăк çитменлĕхсем пур.

Колхозсенче çураки ирттерес ĕçри çак çитменлĕхсем ак мĕн пирки пулаççĕ: республикăри Ялхуçалăх министерстви, нумай райисполкомсемпе КПСС райкомĕсем çурхи уй-хир ĕçĕсене оперативлă ертсе пымаççĕ, çураки хăвăртлăхне вăйлатма кирлĕ мерăсем йышăнмаççĕ.

МТС-семпе колхозсенчи пуçламăш парторганизацисем нумайăшĕ массăлла-политикăлла ĕç ыйтăвĕсем çине тата çуракине ăнăçлăн ирттерессишĕн социализмла ăмăрту организацилесси çине кирлĕ пек çаврăнса пăхмаççĕ.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обкомĕн бюровĕ çапла йышăннă:

1. Ялхуçалăх министерствине, райисполкомсемпе КПСС райкомĕсене çапла тума хушас: çуракине ертсе пырас ĕçе лайăхлатмалла; çак ĕçре палăрнă çитменлĕхсене халех пĕтермелле, çурхи уй-хир ĕçĕсене кĕске вăхăтра, агротехника тĕлĕшĕнчен лайăх ирттермелле тата кашни колхозрах мĕнпур ялхуçалăх культурисене акса хăвармалли государство планне пĕтĕмпех тултармалла.

Çав шутпа:

а) МТС-сенчи мĕнпур тракторсене тата колхозсенчи туртăм вăйне халех уй-хир ĕçĕсене хутшăнтармалла, тракторсене пĕр чăрмавсăр икĕ сменăпа, тулли нагрузкăпа ĕçлеттермелле, кашни тракторист сменăри нормăсене тултарса пымалла тăвас пулать;

б) МТС-семпе колхозсем хушшинче тунă договорсенчи обязательствăсене, уйрăмах срoксем тата ĕç пахалăхĕ тĕлĕшĕнчен, çирĕппĕн пурнăçламалла, договорта кăтартнă обязательствăсене пăснине МТС-семпе колхозсем пытарма хăтланнисене татăклăн пĕтерсе пымалла;

в) колхозсем трактор бригадисене пулăшассине лайăхлатмалла, трактор бригадисем валли горючи, сĕрмелли материалсем, шыв, вăрлăх вăхăтра турттарса памалла, опытлă колхозниксем хушшинчен çителĕклĕ таран прицепщиксем уйăрса памалла, механизаторсем валли культурăпа йăла тĕлĕшĕнчен аван условисем туса памалла;

г) кĕрхи тырăсене тата нумай çул ÿсекен курăксене вăхăтра тата лайăх пăхса ÿстермелле. Вĕсене вырăнти тата минераллă удобренисем сапса памалли плана пĕтĕмпех тултармалла тата кĕрхи тырăсемпе нумай çул ÿсекен курăксем акнă пĕтĕм лаптăка сÿрелемелле.

2. Республикăри Ялхуçалăх министерствине, райисполкомсене тата КПСС райкомĕсене çапла тума хушас: колхозсенче уй-хир ĕçĕсен пахалăхне куллен тĕрĕслесе тăрассине йĕркелемелле, колхозниксемпе трактористсем тунă ĕçе уй-хир бригадисен бригадирĕсем кашни кун йышăнассине организацилемелле, колхоз председателĕсен вара уй-хир бригадисен бригадирĕсенчен ĕçе кашни виçĕ кунта пĕрререн кая мар йышăнмалла; çак ĕçре ялхуçалăх специалисчĕсен ответлăхне, уйрăмах районсенчи ялхуçалăх пайĕн главнăй агрономĕсен, ялхуçалăх ĕçĕсен пахалăхĕ тĕлĕшпе государство инспекторĕсем пулса тăракансен, ответлăхне ÿстермелле.

3. КПСС райкомĕсемпе райисполкомсене, колхоз правленийĕсене, колхозсенчи, МТС-сенчи пуçламăш парторганизацисене çапла тума хушас: çураки мĕнле пыни çинчен тăтăшах сÿтсе явмалла, çураки вăхăтĕнче массăлла-политикăлла ĕçе вăйлатмалла, социализмла ăмăртăва анлăн сарса ямалла тата ăна куллен ертсе пымалла, колхозниксемпе механизаторсен ĕçне тĕрĕс организацилемелле, вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе агрономи науки тунă çитĕнÿсене тата малта пыракансен опытне анлăн сармалла, ĕçе кĕртсе пымалла, Мари тата Мордва республикисенчи ĕçченсемпе ăмăртăва тухса йышăннă обязательствăсене пурнăçласа пымалла.

4. Республикăри тата районсенчи хаçатсен редакторĕсене республикăри колхозсенче çураки мĕнле пыни çинчен куллен çутатса тăма хушас.

5. Çураки планне мĕнпур культурăсем тăрăх агротехника тĕлĕшĕнчен чи лайăх срокра тултарнă тата çуркунне агротехника ĕçĕсем тумалли плана тултарнă колхозсене, МТС-семпе совхозсене кĕртме «Советская Чувашия» тата «Коммунизм ялавĕ» хаçатсен страницисем çинче «Хисеп Хăми» организацилес.

* * *

Министрсен Совечĕпе КПСС обкомĕн бюровĕ мĕнпур колхозниксене, механизаторсене тата ялхуçалăх специалисчĕсене, колхозсемпе МТС-сен руководителĕсене, парти, совет тата комсомол организацийĕсене çуракине ăнăçлăн туса ирттерес, тырă акмалли государство планне кашни колхоз тăрăх пур культурăсем енĕпе те пĕтĕмпех тултармалла тăвас, агротехника тĕлĕшĕнчи пур ĕçсене те пурнăçа кĕртес, çапла майпа 1953 çулта вăйлă тырпул туса илме çирĕп никĕс хывса хăварас ĕçе хăйсен пĕтĕм вăйне пама чĕнеççĕ.

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи РАЙОНСЕНЧЕ УЙ-ХИРТИ ÇУРХИ ĔÇСЕМ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

1953 çулхи апрелĕн 25-мĕшĕ тĕлне (процентпа)

Районсем	Çурхи тырăсем акнă	Нумай çул ÿсекен курăксем акнă	Кĕрхи тырăсен калчисене удобренисем панă	Курăксене удобренисем панă
Красноармейски	5,7	63,4	70,7	14,3
Шăхасан	4,3	100,2	103,2	49,4
Çĕмĕрле	3,7	11,8	81,6	—
Чурачăк	3,5	70,7	118,1	49,4
Елчĕк	3,3	30,7	70,1	62,1
Калинино	3,1	73,6	58,9	6,4
Элĕк	2,9	47,9	29,7	9,3
Йĕпреç	2,8	67,0	87,9	25,6
Советски	2,6	20,7	73,6	12,8
Хĕрлĕ Чутай	2,2	71,5	60,8	—
Канаш	1,9	88,7	71,3	16,7
Муркаш	1,8	42,2	67,3	5,4
Комсомольски	1,7	33,3	71,7	62,3
Первомайски	1,4	38,3	100,6	15,0
Сĕнтĕрвăрри	1,2	113,1	58,9	—
Шупашкар	1,2	55,3	69,9	2,7
Шăмăршă	1,2	32,2	63,2	48,0
Вăрнар	1,0	40,3	81,0	18,2
Пăрачкав	0,8	20,6	54,8	6,6
Чкаловски	0,8	20,4	89,4	37,8
Ишлей	0,7	50,2	127,6	10,4
Тăвай	0,6	49,4	80,0	—
Çĕрпÿ	0,5	22,3	98,6	62,9
Сĕнтĕр	0,4	90,6	65,8	23,1
Улатăр	0,3	4,4	34,8	31,0
Кувакино	0,3	28,2	62,0	—
Куславкка	0,1	63,2	66,3	11,5
Вăрмар	0,1	16,4	115,0	51,6
Етĕрне	0,1	67,6	91,1	22,3
Октябрьски	—	62,7	119,4	24,2

Малашнехи ÿсĕмсемшĕн

Муркаш районĕнчи Сталин ячĕпе, Энгельс ячĕпе тăракан, «Свобода» тата «Красное Сормово» колхозсем çулсеренех пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Вĕсем, иртнĕ ялхуçалăх çулне ăнăçлă вĕçленĕ хыççăн, кăçал пĕлтĕрхинчен пысăкрах обязательствăсем илсе, каллех социализмла ăмăртăва тухрĕç. Хăйсемпе ăмăртса ĕçлеме «Сталинец» колхоза чĕнчĕç.

Юрă праçникĕ

Кăçалхи июнь уйăхĕнче пирĕн республикăри хуласемпе районсенче юрă праçникĕ ирттереççĕ, Акатуй пулман районсенче районти ярмарка кунĕсенче ирттереççĕ. Çак кун ĕçре малта пыракан колхозсене, предприятисене палăртаççĕ. Художествăллă пултарулăх коллективĕсем концертсем параççĕ. Юрă праçникне колхозсенчи, предприятисемпе учрежденисенчи, артельсенчи, шкулсенчи пултарулăх коллективĕсемпе уйрăм исполнительсем хутшăнаççĕ. Шупашкарта пулакан уява республикăри чи лайăх коллективсемпе уйрăм исполнительсене чĕнеççĕ.

Юрă праçникне ирттерме республикăри комисси тунă. Комиссире: М. М. Романова (Облпрофсовет председателĕ), М. С. Семенов (КПСС обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ), М. А. Андреев (Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ), А. И. Иванов (ВЛКСМ обкомĕн секретарĕ), М. К. Костин (культурăпа çутĕç учрежденийĕсен управленийĕн начальникĕ), Н. В. Амурцев (халăх творчестви çуртĕн директорĕ), Г. С. Лебедев (композитор), М. Д. Шумилов (писательсен союзĕн правлени председателĕ), М. С. Спиридонов (художниксен союзĕн правлени председателĕ) тата ытти юлташсем те.

Юрă праçникне лайăх хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе районсемпе хуласенче те комиссисем тăваççĕ. Художествăллă пултарулăх коллективĕсене пулăшма, семинарсем ирттерме районсене искусство работникĕсем каяççĕ.

Май уйăхĕ шучĕпе ĕçлеççĕ

Май уявĕ ячĕпе ăмăртса ĕçлесе, Чăваш АССР Апат-çимĕç промышленность министерствине пăхăнса тăракан чылай предприятисем ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тунă. Етĕрнери çу тата олифа завочĕ апрелĕн 10-мĕшĕ тĕлне тăватă уйăхри плана 126 процент тултарнă. Çак уйăх вĕçлениччен завод тата чылай продукци туса кăларать.

Шупашкарти, Çĕмĕрлери тата Улатăрти армансем, Шупашкарти сăра завочĕ тăватă уйăхри плана 20 кун маларах тултарнă. Вăрнарти, Йĕпреçри, Калининăри, Çĕмĕрлери тата Шупашкарти апат-çимĕç комбиначĕсем тăватă уйăхри планран ирттерсе чылай продукци туса кăларнă. Асăннă предприятисен коллективĕсем продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн, плана çирĕплетнĕ ассортиментсем тăрăх ăнăçлă пурнăçлассишĕн кĕрешеççĕ.

Г. ЗЕЛЕНОВ,
Апат-çимĕç промышленность министерствин плановăй экономика пайĕн начальникĕ.

Апрельти плана тултарнă

ТĂВАЙ. Çĕнĕ Пуянкассинчи Сталин ячĕпе тăракан промăртель пĕрремĕш кварталта продукци туса кăлармалли плана 115 процент тултарчĕ. Уяв ячĕпе ăмăртăва хутшăнса, артель членĕсем уйăхри плана апрелĕн 23-мĕшĕ тĕлне тултарчĕç.

«8 марта» промартель кварталти планран ирттерсе чылай продукци туса кăларчĕ, çак уйăхри плана срокчен тултарчĕ.

А. ВИКТОРОВ.

Çĕнĕ хастарлăхпа

Вырăнти топливо промышленность управленине пăхăнса тăракан Çĕмĕрлери вăрманпромхоз пĕрремĕш кварталти производство планне чылай ирттерсе тултарчĕ. Уяв ячĕпе ăмăртăва хутшăнса, вăрманпромхоз коллективĕ çак уйăхри плана срокчен тултарма, планран ирттерсе 30 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларма сăмах пачĕ.

Çак кунсенче А. Николаев, А. Новичков шоферсем, М. Печанов, М. Муруков бондарьсем ĕç нормине 195 процент таран тултарса пыраççĕ. Вăрманпромхоз коллективĕ панă сăмаха чыслăн пурнăçлать.

К. ДМИТРИЕВ.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ



Сталинградгидрострой. Строительсем Атăл урлă канат карса çул тăвас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Çав çул Атăлăн сылтăм çыранĕпе Песчаный утрав хушшинче пулать. Канат çакса хумалли юпасен никĕсĕсене бетонпа хытараççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: канат çакса хумалли юпа никĕсне бетонпа хытараççĕ.

А. МАКЛЕЦОВ фотоÿкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Савăнăçлă пухусем

Мускавра пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен праçникĕ—Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе савăнăçлă пухусем ирттерме тытăннă.

Апрелĕн 25-мĕшĕнче Государствăн Л. М. Каганович ячĕпе тăракан пĕрремĕш подшипник завочĕн культура çуртне столицăри Ждановски районĕнчи фабрикăсемпе заводсенчи рабочисем, инженерсемпе техниксем, служащисем, парти, совет тата общественăлла организацисен представителĕсем пухăннă. Пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен праçникĕ—Майăн 1-мĕшĕ çинчен Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Мускав хула комитечĕн секретарĕ В. И. Прохоров юлташ доклад туса панă.

«Серп и молот» заводри хурçă шăратакансем, прокатчиксем, вальцовщиксем, инженерсемпе техниксем тата служащисем пин çын ытла завод клубĕнче савăнăçлă пухура пулнă. «Каучук» заводра, «Парижская Коммуна» фабрикăра, столицăри тата ытти нумай предприятисемпе учрежденисенче те савăнăçлă пухусем пулса иртнĕ. (ТАСС).

Пĕрремĕш статор

КРАМАТОРСК, апрелĕн 25-мĕшĕ (ТАСС). Ново-Краматорскри Сталин ячĕпе тăракан заводри машиностроительсем Май уявĕ умĕнхи ăмăртура çĕнĕ çитĕнÿ тунă. Вĕсем паян Куйбышев гидроэлектростанцийĕн турбини валли пĕрремĕш статор туса çитернĕ. Статор йывăрăшĕ 200 тонна ытла.

Статора 15 ĕçкунĕнче формăласа тата шăратса çитернĕ,— ку вăл график тăрăх палăртнинчен икĕ хут хăвăртрах ĕçлени пĕлтерет.

Иван Будовский тата Иван Шорохов ертсе пыракан бригадăсенчи рабочисем хăйсем умне лартнă задачăна ăнăçлă пурнăçланă. Вĕсем, Май уявĕ умĕнхи вахтăна тăрса, производство заданине кашни кунах 2—2,5 хут тултарса пынă.

Ăмăртура малта пыракансем

ГРОЗНЫЙ. Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе чĕнсе каланисем Грознăйри нефтяниксене ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантарнă. «Ташкала-нефть» трестри пĕрремĕш промысла коллективĕ тăватă уйăхра нефть кăлармалли плана тултарса çитернĕ.

«Грознефтьри» нефть кăлармалли шăтăксем пăраласа шăтарас тĕлĕшпе ĕçлекенсем те Майăн 1-мĕшне ĕçри çитĕнÿсемпе кĕтсе илеççĕ. Грознăйри разведка кантурĕн коллективĕ Май уйăхĕнчи плана пурнăçлама тытăннă.

РИГА. «Засулаука мануфактура» комбинатĕнчи пир-авăр тĕртекенсем Кулавнăри рабочисем пуçарса янă паха ĕçе республикăра чи малтан пурнăçлама тытăннă. Предприятире чĕртаварпа материалсем ытлашши расходламасăр пилĕк çуллăх плана срокчен пурнăçлассишĕн социализмла ăмăрту саралнă. Çак ăмăрту паха результатсем панă. Предприяти коллективĕ тăватă уйăхри производство планне срокчен пурнăçланă. Майăн 1-мĕшĕччен пир-авăр тĕртекенсем Тăван çĕршыва 130 пин метр паха пир-авăр тĕртсе параççĕ.

Апрелĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС).

Ҫуртсене хӑвӑртрах туса ӗҫе кӗртер! Строительство хакне йӳнетер, пахалӑхне лайӑхлатар!

„Легпромстройӑн" 11-мӗш трестӗнчи строительсен коллективӗ илнӗ

СОЦИАЛИЗМЛА ОБЯЗАТЕЛЬСТВӐСЕМ

Коммунистсен партийӗн XIX-мӗш съезчӗ йышӑннӑ решенисемпе хавхаланса, Совет Союзӗнчи ӗҫҫыннисем пиллӗкмӗш пилӗк ҫуллӑх плана тултарассишӗн тата иртгерсе тултарассишӗн, халӑх хуҫалӑхӗн пур отраслӗсене те хӑвӑтлӑн аталантарассишӗн чун-чӗререн тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ.

Пӗтӗм совет халӑхӗпе пӗрле «Легпромстройӑн» 11-мӗш трестӗнчи строительсен коллективӗ те ҫак шухӑшпа пурӑнать.

1953 ҫулта трест коллективӗ умӗнче пысӑк та ответлӑ задачӑсем тӑраҫҫӗ. Ҫав задачӑсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫлама йӳр майсем те ҫителӗклӗ. Трест ҫӗнӗ техникӑпа хӗҫпӑшалланнӑ, ҫӗр чавакан машинӑсен паркӗ ӳснӗ, ӑста рабочисем тата инженерсемпе техниксем ҫителӗклӗ.

1953 ҫулхи плана срокчен тултарассишӗн социализмла ӑмӑртӑва хутшӑнса, эпир, рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем ҫакӑн пек обязательствӑсем илетпӗр:

1. 1953 ҫулхи строительствӑпа монтаж ӗҫӗсен планне декабрӗн 21-мӗшӗ тӗлне тултармалла.

2. Пир-авӑр фабрикинчи строительство ӗҫӗсене пӗтӗмпех ноябрӗн 7-мӗшӗ тӗлне туса пӗтермелле.

Декабрӗн 5-мӗшӗ тӗлне ҫип арламалли 76.390 йӗке ҫӗнӗрен вырнаҫтарса ӗҫе ямалла; вӑл шутра:

иккӗмӗш кварталта 20.000 йӗке;
виҫҫӗмӗш кварталта 24.000 йӗке;
тӑваттӑмӗш кварталта 24.390 йӗке.

3. Майӑн 15-мӗшӗ тӗлне пир тӗртекен фабрикӑна оборудовани вырнаҫтарса лартма хатӗрлесе ҫитермелле, декабрӗн 21-мӗшӗ тӗлне пир тӗртекен 1.400 станок вырнаҫтарса лартмалла; вӑл шутра:

иккӗмӗш кварталта 400 станок;
виҫҫӗмӗш кварталта 400 станок;
тӑваттӑмӗш кварталта 600 станок.

4. 5.600 тӑваткал метр чухлӗ пурӑнмалли ҫуртсем туса пӗтермелле; вӑл шутра:

иккӗмӗш кварталта 700 тӑваткал метр;
виҫҫӗмӗш кварталта 1.600 тӑваткал метр;
тӑваттӑмӗш кварталта 2.000 тӑваткал метр.

1954 ҫулта туса пӗтерме кӑҫал 9.600 тӑваткал метр чухлӗ тӑватӑ ҫурт тума тытӑнмалла.

5. Июнӗн 25-мӗшӗ тӗлне 110 ача вырнаҫмалӑх ача ясли туса пӗтермелле.

6. Декабрӗн 21-мӗшӗ тӗлне 100 ача вырнаҫмалӑх ача сачӗ туса пӗтермелле.

7. Июлӗн 15-мӗшӗ тӗлне ҫӑкӑр заводне туса пӗтерсе ӗҫе ямалла.

8. Ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстермелли плана 5 процент ирттерсе тултармалла.

9. Строительствӑпа монтаж ӗҫӗсен хакне планпа палӑртнинчен 2,7 процент йӳнетмелле, ҫавна май 1.100 пин тенкӗ перекетлесе хӑвармалла.

10. 1953 ҫулта пур ҫуртсемпе сооруженисене те лайӑх тумалла.

11. Производство новаторӗсен малта пыракан меслечӗсене тӑтӑшах вӗренмелле, пӗтӗҫтермелле тата ҫав мелсемпе строительствӑра анлӑн усӑ курмалла. Малта пыракан ӗҫ меслечӗсем тӑрӑх ӗҫлеме 180 ҫынтан кая мар вӗрентмелле.

12. Пысӑк пахалӑхпа ӗҫлекен бригадӑсен хисепне 13 бригадӑран 20 бригадӑна ҫитермелле.

СОЦИАЛИЗМЛА ОБЯЗАТЕЛЬСТВӐСЕНЕ «ЛЕГПРОМСТРОЙӐН» 11-мӗш ТРЕСТӖНЧИ РАБОЧИСЕН, ИНЖЕНЕРСЕМПЕ ТЕХНИКСЕН ТАТА СЛУЖАЩИСЕН ПӖРЛЕХИ ПУХӐВӖНЧЕ ЙЫШӐННӐ.

Вӑрман работникӗсен хастарлӑхӗ

Сулӑ юхтаракан предприятисенче тата вӑрман хуҫалӑхӗсенче ӗҫлекен рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем Май уявне ӗҫре ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тунипе кӗтсе илессишӗн кӗрешеҫҫӗ. Приволжски вӑрманпромхозри сулӑ юхтаракан участок коллективӗ сулӑ тумалли ӗҫе вӑхӑтра пурнӑҫларӗ. Вӑрманпромхоз Ҫӗмӗрлери экстракт тӑвакан завода тата сӗтел-пукан комбинатне баржӑсем ҫине тиесе юман ӑсатрӗ. Ҫавӑн пекех Улатӑрти йывӑҫ япаласем тӑвакан комбината та чылай йывӑҫ ӑсатнӑ. Паян-ыран Ҫӗрпӳ хулине пӗр сулӑ, Сӗнтӗрвӑррине тепӗр сулӑ илсе каяҫҫӗ.

Ҫак кунсенче вӑрман хуҫалӑхӗсенче те хӗрӳллӗ ӗҫлеҫҫӗ. Чӑваш АССР Вӑрман хуҫалӑх управленине пӑхӑнса тӑракан вӑрман хуҫалӑхӗсен кӑҫал 4,6 пин гектар ҫине йывӑҫ лартмалла. Государство заданине чыслӑн пурнӑҫлассишӗн вӑрман хуҫалӑхӗсем, лесничествӑсем, бригадӑсем хушшинче социализмла ӑмӑрту анлӑн сарӑлнӑ.

Вӑрман хуҫалӑхӗсем пурте йывӑҫ лартма тата акма тытӑннӑ. Уйрӑмах Шупашкар вӑрман хуҫалӑхӗ йывӑҫ лартас ӗҫе лайӑх йӗркеленине палӑртас пулать. Вӑл 600 гектар ҫине йывӑҫ лартнӑ.

Вӑрман хуҫалӑхӗсем ҫуркунне 50 гектар ҫинче питомниксем тӑваҫҫӗ. Питомниксенче юман, хыр, чӑрӑш, ҫӑка тата ытти йышши йывӑҫсем акса ӳстереҫҫӗ. Вӑрман хуҫалӑхӗсем колхозсене, шкулсене, учрежденисене тата ӗҫҫыннисене ҫулсерен кӑларса лартмалли йывӑҫ нумай сутаҫҫӗ.

П. ИЛЬИН.

Хӗрлӗ ялав илнӗ

СОВЕТСКИ. Чемей ял Совечӗн канцелярийӗнче Хӗрлӗ ялав пур. Ку ялава райисполком 1952 ҫулта ял Совечӗсен социализмла ӑмӑртӑвӗнче мала тухнӑшӑн панӑ. Кӑҫалхи пӗррремӗш кварталти социализмла ӑмӑрту итогӗсене пӑхса тухсан, райсовет исполкомӗ куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялава Чемей ял Советӗнчех хӑвармалла тунӑ. Ял Совечӗ кварталта укҫа-тенкӗ пухмалли плана 102 процент пурнӑҫланӑ.

Паллах, ҫак ҫитӗнӳ хӑй тӗллӗн пулман. Ял Совет председателӗ Макаровпа налог агенчӗ Н. Степанов юлташсем ялти активпа тачӑ ҫыхӑнса ӗҫлеҫҫӗ. Ялсенчи колхозниксем хушшинче агитациллӗ-массӑллӑ ӗҫе аван туса пынӑ.

Социализмла ӑмӑртура Турай, Асламас тата Якаткасси ял Совечӗсем те малта пыраҫҫӗ.

В. МИХАЙЛОВ.

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

КПСС Шупашкар хула комитечӗн VI-мӗш пленумӗ

КПСС Шупашкар хула комитечӗн черетлӗ VI-мӗш пленумӗ хулари благоустройство ӗҫӗ ҫинчен хула Совет исполкомӗн председатель заместителӗн А. Киселев юлташӑн докладне итлесе сӳтсе яврӗ.

Докладчик тата тухса калакансем ҫакна палӑртрӗҫ: партипе правительство хуласенче ҫурт-йӗр строительствине вӑйлатассишӗн тата хуласене лайӑхлатассишӗн куллен тӑрӑшнине пула юлашки ҫулсенче Шупашкар хули сӑн-сӑпачӗ улшӑнчӗ, хула чылай илемленчӗ. Строительство анлӑн сарӑлса пынӑ май хулара ҫӗнӗ кварталсем пулса тӑчӗҫ.

Благоустройство енӗпе иртнӗ ҫулта уйрӑмах пысӑк ӗҫсем тунӑ. Государство фондне кӗрекен 21 пурӑнмалли ҫурт туса пӗтерсе ӗҫе янӑ, унта пурӗ 7 пин тӑваткал метр шутланать. Рабочисемпе служащисем харпӑр хӑй валли 178 ҫурт туса лартнӑ. Хула урамӗсенче 22 пин тӑваткал метр чул сарнӑ, асфальт сарнӑ вырӑнсене 4.600 тӑваткал метр юсанӑ. 9.500 йывӑҫ лартнӑ, ку шутран 230 йывӑҫ — нумай ҫул ӳснисем, 12 пин тӗм—улма тата ҫырла йывӑҫҫисем. Икӗ кӗпер, пӗр ҫӗнӗ мунча тунӑ. Хулари рынока тӗпренех ҫӗнетсе лайӑхлатнӑ, ку ӗҫ вӗҫленсе пырать. Атӑл хӗррине йӗркене кӗртес енӗпе те нумай ӗҫсем тунӑ. Водопровода пысӑклатас тата электросете лайӑхлатас тӗлӗшпе хӑшпӗр ӗҫсене тунӑ.

Апла пулин те, партин хула комитечӗн бюровӗпе хула Совечӗн исполкомӗ благоустройство ӗҫӗсене пурнӑҫа кӗртме мӗнпур ӗҫсене туса ҫитермен, ку ӗҫсене тума уйӑрса панӑ укҫа-тенкӗпе пӗтӗмпех усӑ курман. Водосвет (директорӗ Благодатских юлташ), «Чӑвашстрой» тресчӗ (управляющийӗ Куприянов юлташ) водопровода пысӑклатас тӗлӗшпе ҫителӗксӗр ӗҫленӗ пирки, пӗлтӗр ҫак ӗҫе тумалли сроксене ирттерсе янӑ, чылай укҫа-тенкӗпе усӑ курайман. Хулари электросете ҫӗнетме панӑ укҫа-тенкӗпе 47 процент кӑна усӑ курнӑ. Пурӑнмалли коммунальнӑй ҫуртсене юсама уйӑрса панӑ укҫа-тенкӗпе те пӗтӗмпех усӑ курман.

КПСС хула комитечӗпе хула Совечӗн исполкомӗ, благоустройство ӗҫӗсен заданийӗсене ӑнӑҫлӑ пурнӑҫлаччӑр тесе, строительствӑпа монтаж организацийӗсен ӗҫне лайӑхлатас тӗлӗшпе ҫителӗклӗ мерӑсем йышӑнман. Пурӑнмалли ҫуртсем тӑвасси тата хулан благоустройстви ҫине ҫителӗксӗр пӑхакан предприятисемпе учрежденисен руководителӗсенчен вӗсем тивӗҫлипе ыйтман.

Хула Совечӗн ремонт кантурӗ (начальникӗ Самохин юлташ) хӑйӗн ӗҫӗсене пурнӑҫласа пыраймасть, унӑн кадрсем ҫитмеҫҫӗ, механизмсем тата строительство материалӗсем ҫук.

Хула Совечӗн исполкомӗ пурӑнмалли ҫуртсене тирпейлӗ сыхласа усрасси ҫине ҫителӗклӗ пӑхмасть. Пурӑнмалли ҫуртсемпе учрежденисен умӗсене, алӑксене тата хӳмисене илемлетес, хулари предприятисемпе учрежденисем патне пымалли ҫулсем тӑвас енӗпе ҫитлӗксӗр ӗҫлет. 1-мӗш номерлӗ ҫӑкӑр завочӗ (директорӗ Романова юлташ), чугун ҫул станцийӗ (начальникӗ Семенов юлташ), «Заготзерно» пункчӗ (директорӗ Иванов юлташ) патне пыма ҫул ҫук пирки ку вырӑнсенче грузсем турттарма май ҫук.

Хула Совечӗн исполкомӗ хула хӗррипче благоустройство ӗҫӗ ҫине (урамсене чул сарасси, ҫутӑ кӗртесси тата шыв парасси) тивӗҫлипе ҫаврӑнса пӑхмасть. Харпӑр хӑй валли ҫурт лартакансенчен вӗсене уйӑрса панӑ участоксем ҫинче йывӑҫсем лартма тата тротуарсем тума хӑйсем ҫине илнӗ обязательствӑсене пурнӑҫлас енӗпе исполком тимлӗн ыйтмасть.

Хула Совет исполкомӗпе милици органӗсем урамсене, килкартисене, паркСене таса тытасси тата йывӑҫсене сыхласа упрасси ҫинчен исполком кӑларнӑ обязательнӑй постановленисене ҫирӗп пурнӑҫа кӗртсе пымаҫҫӗ. Йывӑҫсем лартассипе вӗсене сыхласа усрас ӗҫе шкул ачисене хутшӑнтарманпа пӗрех. Ку пысӑк ӗҫе комсомолецсемпе союзра тӑман ҫамрӑксем те сахал хутшӑнаҫҫӗ.

Пленумра строительство организацийӗсен руководителӗсене — «Легпромстройӑн» 11-мӗш номерлӗ тресчӗн управляющине Каплин юлташа, «Росмясомолстройӑн» строительствӑпа монтаж управленин начальникне Динев юлташа хытӑ критиклерӗҫ. Мӗншӗн тесен, вӗсем пурӑнмалли ҫуртсене, коммунальнӑй тата промышленность предприятийӗсене лайӑх туса ҫитермесӗр ӗҫе кӗртеҫҫӗ. Текстильстрой тавра, сӑмахран, юлашки вӑхӑтра илемлӗ ҫуртсем тунӑ, унта пысӑк поселок ӳсse ларчӗ, анчах урамсенче тротуарсем, йывӑҫ-курӑксем ҫук. Шыв-шур вӑхӑтӗнче унти урамсем тӑрӑх иртсе ҫӳреме те хӗн.

Хӑшпӗр организацисем, сӑмахран, Горькипе Хусан хушшинчи ҫул управленийӗ, Шалти ӗҫсен министерстви, хӑйсене ҫывӑх таврари вырӑна тирпейлӗ тата илемлӗ тытаҫҫӗ. Анчах хулара ҫак паха пуҫарӑва сарни ҫук.

Пленумра пулнисем партин хула комитечӗн бюровӗ хулари благоустройство ӗҫӗсен планне ӑнӑҫлӑ пурнӑҫа кӗртес енӗпе пуҫламӑш парторганизацисене ҫителӗксӗр ертсе пынине палӑртрӗҫ.

Благоустройство енӗпе хулара кӑҫал пысӑк ӗҫсем тума палӑртнӑ. Анчах ҫулталӑк пуҫланнӑранпа тӑватӑ уйӑх иртрӗ пулин те нумай ӗҫсене халӗ те туман. Уйрӑмах, водопровода анлӑлатма уйӑрса панӑ укҫа-тенкӗпе пачах усӑ курмаҫҫӗ.

Пленум благоустройство ӗҫӗсене тума хулари мӗнпур ӗҫҫыннисене хутшӑнтарма кирлине, ку ӗҫ ҫине пуҫламӑш парторганизацисен пурин те тимлӗн пӑхмаллине астутарчӗ.

Пленумра пурӗ 16 ҫын тухса каларӗ. Горький—Хусан ҫулӗн управлени начальникӗ Тарасов, электроаппаратура завочӗн директорӗ Ардаматский, Сосновкӑри поселок Совечӗн председателӗ Миронов, Чӑваш АССР Коммунальнӑй хуҫалӑх министрӗн заместителӗ Кудряшова, ВЛКСМ хула комитечӗн секретарӗ Алфер, республика больницинчи главнӑй врач Сидnev, ялхуҫалӑх институчӗн директорӗ Калинцев, Чӑваш АССР Шалти ӗҫсен министрӗ Вакарев, КПСС хула комитечӗн секретарӗ Никитин т. ыт. юлташсем те тухса каларӗҫ.

Благоустройство ӗҫӗсене тӑвас енӗпе хулари парторганизаци умӗнче тӑракан задачӑсем ҫинчен пленумра парти обкомӗн пӗррремӗш секретарӗ Т. Ахазов юлташ сӑмах тухса каларӗ.

Сӳтсе явнӑ ыйту тӑрӑх пленум тивӗҫлӗ решени йышӑнчӗ.

Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗпе Чӑвашоблпрофсоветра

Чӑваш АССР-ӗнчи промышленность, транспорт, ҫыхӑну тата суту-илӳ предприятийӗсем 1953 ҫулхи пӗррремӗш кварталта социализмла ӑмӑртса ӗҫленин итогӗсем ҫинчен

Чӑваш АССР-ӗнчи промышленность, транспорт, ҫыхӑну тата суту-илӳ предприятийӗсем 1953 ҫулхи пӗррремӗш кварталта ӑмӑртса ӗҫленин итогӗсене пӑхса тухса, Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗпе Чӑвашоблпрофсовет президиумӗ ҫапла йышӑннӑ:

СОЮЗЛА МИНИСТЕРСТВӐСЕНЕ ПӐХӐНСА ТӐРАКАН ПРЕДПРИЯТИСЕМ ЕНӖПЕ

Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗпе Чӑвашоблпрофсоветӑн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне **Шупашкарти Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденлӗ заводрах** хӑвармалла тунӑ (директорӗ **Ардаматский** юлташ, завком председателӗ **Червяков** юлташ). Завод 1953 ҫулхи пӗррремӗш кварталта продукци туса кӑлармалли плана 111,1 процент, ҫирӗплетнӗ номенклатура тӑрӑх тултарнӑ, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстермелли плана 2,6 процент ирттерсе тултарнӑ, продукцин хӑйне ларакан хакне 5,5 процент вырӑнне 6,9 процент йӳнетнӗ, таварлӑ продукцин хӑйне ларакан хакне йӳнетсе планран ирттерсе 274 пин тенкӗ перекетленӗ, социализмла ӑмӑртӑвӑн ытти условийӗсене те пурнӑҫланӑ.

Ҫӗмӗрлери йывӑҫ япаласем тӑвакан тата экстракт тӑвакан «Большевик» заводсем, Улатӑрти махорка фабрики лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

АПАТ-ҪИМӖҪ ПРОМЫШЛЕННОҪӖПЕ АШ-КАКАЙ ТАТА СӖТ-ҪУ ПРОМЫШЛЕННОҪӖ ЕНӖПЕ

Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗпе Чӑвашоблпрофсоветӑн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне **Етӗрнери ҫу тата олифа заводне** памалла тунӑ (директорӗ **Смоленцев** юлташ, завком председателӗ **Васильев** юлташ). Завод пӗррремӗш кварталта продукци туса кӑлармалли плана ҫирӗплетнӗ ассортимент тӑрӑх ирттерсе тултарнӑ.

Шупашкарти ҫу завочӗ, Улатӑрти аш-какай комбиначӗ, Вӑрнарти выльӑх пусакан пункт, Ҫӗмӗрлери ҫӑкӑр комбиначӗ тата арман лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

РАЙОНСЕНЧИ ВЫРӐНТИ ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ПРЕДПРИЯТИЙӖСЕМ ЕНӖПЕ

Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗпе Чӑвашоблпрофсоветӑн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне **Канаш хулинчи промкомбината** памалла тунӑ (директорӗ **Орлов** юлташ, местком председателӗ **Полукаров** юлташ). Комбинат пӗррремӗш кварталта продукци туса кӑлармалли плана 143,7 процент тултарнӑ.

Шупашкарти тарасасем юсакан завод тата Шуркассинчи райпромкомбинат лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

РАЙОНСЕНЧИ АПАТ-ҪИМӖҪ ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ПРЕДПРИЯТИЙӖСЕМ ЕНӖПЕ

Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗпе Чӑвашоблпрофсоветӑн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне **Калининӑри апат-ҫимӗҫ комбинатӗнчех** хӑвармалла тунӑ (директорӗ **Малов** юлташ, местком председателӗ **Журавлев** юлташ). Апат-ҫимӗҫ комбиначӗ продукци туса кӑлармалли плана ҫирӗплетнӗ ассортимент тӑрӑх 138,3 процент тултарнӑ.

Шупашкар хулинчи апат-ҫимӗҫ комбиначӗ лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

ВЫРӐНТИ ТОПЛИВО ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ПРЕДПРИЯТИЙӖСЕМ ЕНӖПЕ

Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗпе Чӑвашоблпрофсоветӑн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне **Шупашкар вӑрманпромхозне** памалла тунӑ (директорӗ **Козлов** юлташ, рабочком председателӗ **Матвеев** юлташ). Вӑрманпромхоз продукци туса кӑлармалли пӗррремӗш кварталти плана пӗтӗмпе 120,1 процент тултарнӑ.

Кирери, Ҫӗмӗрлери вӑрманпромхозсем тата Шӑмӑршӑри райтоп лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

ПОЛИГРАФИ ПРОМЫШЛЕННОҪӖН ПРЕДПРИЯТИЙӖСЕМ ЕНӖПЕ

Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗпе Чӑвашоблпрофсоветӑн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне **Вӑрнарти типографине** памалла тунӑ (районти хаҫат редакторӗ **Волков** юлташ, профорг **Смирнов** юлташ). Типографи продукци туса кӑлармалли пӗррремӗш кварталти плана 165,2 процент тултарнӑ.

Сӗнтӗрти, Вӑрмарти тата Ҫӗрпӳри типографисем лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

КОММУНАЛЬНӐЙ ХУҪАЛӐХ ПРЕДПРИЯТИЙӖСЕМ ЕНӖПЕ

Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗпе Чӑвашоблпрофсоветӑн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне **Ҫӗмӗрлери хваттере кӗмелли ҫурта** памалла тунӑ (заведующийӗ **Абрамова** юлташ, местком председателӗ **Арзамасов** юлташ). Ҫак ҫурт пӗррремӗш кварталти плана 105,5 процент тултарнӑ, ӗҫсен хӑйне ларакан хакне 3,7 процент йӳнетнӗ.

Улатӑрти мунча работникӗсем тата Улатӑрти ремонтпа строительство кантурӗ лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

ҪЫХӐНУ ПРЕДПРИЯТИЙӖСЕМ ЕНӖПЕ

Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗпе Чӑвашоблпрофсоветӑн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне **Ҫӗмӗрле районӗнчи ҫыхӑну кантурне** памалла тунӑ (начальникӗ **Константинова** юлташ, рабочком председателӗ **Зайцев** юлташ). Ҫак кантур тупӑш илмелли кварталти плана 101,6 процент, радио кӗртмелли плана 100 процент, хулара ҫӗнӗ телефонсем кӗртмелли плана 300 процент, хаҫат-журнал тата кӗнеке сармалли тата сутмалли плана 103,2 процент тултарнӑ.

Шупашкар хулинчи ҫыхӑну кантурӗ, Союзпечатӗн Шупашкар хулинчи пайӗ, Етӗрнери тата Вӑрнарти ҫыхӑну кантурӗсем лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

ТРАНСПОРТ ЕНӖПЕ

Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗпе Чӑвашоблпрофсоветӑн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне Хусан чугун ҫулӗн **Улатӑрти ҫуртсемпе сооруженисен дистанцине** памалла тунӑ (начальникӗ **Степанов** юлташ, местком председателӗ **Фролова** юлташ).

Шупашкар станцинчи транспортпа экспедици кантурӗ лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

Социализмла ӑмӑрту условийӗсене пурнӑҫламан пирки Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗпе Чӑвашоблпрофсоветӑн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне вӑрман тата йывӑҫ япаласем тӑвакан промышленность предприятийӗсене, вӑрман хуҫалӑхӗсене, суту-илӳ организацийӗсемпе столовӑйсене никама та памалла мар тунӑ.

1953 ҫулхи пӗррремӗш кварталта Ҫӗмӗрлери сӗтел-пукан комбиначӗ, Канашри вагонсем юсакан завод, Вӑрмарти сӗтел-пукан фабрики, Ҫӗрпӳри, Сӗнтӗрти пир-авӑр фабрикисем тата Шупашкарти чӗлхе фабрики ҫителӗксӗр ӗҫленине палӑртнӑ.

Строительство планне ӑнӑҫлӑ тултарар

Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн XIX-мӗш съезчӗ йышӑннӑ решенисенче хамӑр ҫӗршывра коммунизм тумалли программа кӑтартса панӑ. Съезд СССР Союзне 1951—1955 ҫулсенче аталантармалли пиллӗкмӗш пилӗк ҫуллӑх план тӗлӗшпе панӑ директивӑсенче социализмла экономикӑна хӑвӑрт аталантарма, совет ҫыннисен пурнӑҫпа культура условийӗсене лайӑхлатса пыма палӑртнӑ. Промышленность производствине малалла ӳстермелли план тӑрӑх ҫӗнӗ пилӗкҫуллӑхра промышленноҫа укҫа-тенкӗ хывассине, тӑваттӑмӗш пилӗкҫуллӑхрипе танлаштарсан, икӗ хут ӳстермелле. Транспортра, социализмла ялхуҫалӑхӗнче, халӑх хуҫалӑхӗн ытти отраслӗсенче те строительство ӗҫӗсем ҫултан-ҫул ӳссе пыраҫҫӗ.

Коммунистсен партийӗн XIX-мӗш съезӗнче тунӑ докладра М. Сабуров юлташ ҫапла каларӗ: «Ҫӗнӗ пилӗк ҫуллӑх плана тултарасси хӑй тӗллӗн пулма пултараймасть, ҫакӑ вӑл чылаях вӑй хума, совет ҫыннисене творчествӑлла ӗҫлеме хушать. Ҫакӑ вӑл капитальнӑй строительствӑн питех те пысӑк программине пурнӑҫлама хушать. Пирӗн ҫӗршыври капитальнӑй строительство вӑл Коммунистсен партийӗ лартакан малашнехи питех те пысӑк хуҫалӑхла задачӑсене татса памалли тӗп май пулнӑ, халӗ те ҫаплах пулать, халӑх хуҫалӑхӗн пур отраслӗсене те аталантармалли хӑвӑртлӑхсемпе ҫулсене кӑтартса паракан тӗп фактор пулнӑ, халӗ те ҫавӑн пекех пулса тӑрать».

Сталинла пилӗкҫуллӑхсем вӑхӑтӗнче Чӑваш республики, Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви куллен пулӑшса пынипе, социализмла хуҫалӑха аталантарас, ӗҫҫыннисен пурнӑҫпа культура условийӗсене лайӑхлатас тӗлӗшпе пысӑк ҫитӗнӳсем турӗ. Промышленноҫа, коммунальнӑй хуҫалӑха, культура строительствине, ялхуҫалӑхне укҫа-тенкӗ хывасси ҫулсерен ӳсе пырать. Уйрӑмах 1953 ҫулта строительство тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем тума палӑртнӑ. Ҫӗнӗ предприятисем, пурӑнмалли ҫуртсем, шкулсемпе больницӑсем, культура учрежденийӗсен ҫурчӗсем ҫӗнӗрен туса лартма, фабрикӑсемпе заводсене ҫӗнетсе пысӑклатма республикӑна вуншар миллион тенкӗ укҫа уйӑрса панӑ. Ҫак тӗслӗх партипе правительство чӑваш халӑхне питӗ пысӑк пулӑшу панине кӑтартать.

Анчах строительство организацийӗсем ҫителӗксӗр ӗҫленине, хӑватлӑ техникӑна туллин усӑ курма, йывӑр ӗҫсене механизацилеме тӑрӑшманнипе республика строительство валли уйӑрса паракан укҫа-тенкӗпе ҫулсерен пӗтӗмӗшпех усӑ курмасть. 1952 ҫулта республика капитальнӑй ӗҫсем тумалли плана тултараймарӗ. Строительствӑпа монтаж ӗҫӗсен планне уйрӑмах Шупашкарти пир-авӑр комбинатне тӑвакан трест, «Чӑвашвӑрман» тресчӗ, Канашри вагонсем юсакан завод, Ҫӗмӗрлери сӗтел-пукан комбиначӗ, аш-какай тресчӗ ҫителӗксӗр тултарчӗҫ.

Республикӑра пысӑкрах строительство организацийӗсем пурӗ ҫиччӗ. Вӗсенчен 1952 ҫулхи плана «Чӑвашстрой» трест ҫеҫ тултарчӗ.

Строительство ӗҫӗсем кӑҫал та япӑх пыраҫҫӗ. Пӗррремӗш кварталти плана пӗр строительство организацийӗ те тултарман. СССР Ҫул-йӗр министерствин Канашри строительствӑпа монтаж кантурӗ (начальникӗ Голованов юлташ) уйрӑмах япӑх ӗҫленине палӑртас пулать. Ку кантурӑн плана тултарса пыма мӗн кирли пурте ҫителӗклӗ. Апла пулин те, вӑл пӗррремӗш кварталти плана ҫуррине те тултарман. Кантур юлса пыни унӑн начальникӗ Голованов юлташ ӗҫре ответлӑх туйманнинчен, рабочисем валли тухӑҫлӑ ӗҫлеме майсем туса паманнинчен, йывӑрлӑхсемпе чӑрмавсене ҫийӗнчех пӗтерсе пыма татӑклӑ мерӑсем йышӑнманнинчен килет. Стройкӑра ӗҫе тӗрӗс йӗркелемен, дисциплина япӑх, механизмсемпе туллин усӑ курмаҫҫӗ, графиксене пурнӑҫламаҫҫӗ. Голованов юлташ кадрсем суйласа илес ӗҫре парти кӑтартӑвӗсене пӑсать.

Кантур Канашри чугун ҫул станцийӗнчи вокзала тата вагонсем юсакан заводри пурӑнмалли ҫурта хӑвӑртрах туса пӗтерме татӑклӑ мерӑсем йышӑнмасть. Кун пек ҫитменлӗхсем ытти строительство организацийӗсенче те пур-ха.

Строительство ӗҫӗсем ҫителӗксӗр хӑвӑртлӑхпа пулса пынишӗн заказчиксем те ответлӑ. Заказчиксем чылайӑшӗ стройкӑсене проектсемпе сметӑсем вӑхӑтра тӑратмаҫҫӗ. Сӑмахран, Ҫӗмӗрлери сӗтел-пукан комбиначӗн (директорӗ Хрипушин юлташ), Шупашкарти пир-авӑр комбиначӗн (директорӗ Бекренев юлташ) строительство валли ҫирӗплетнӗ техникӑлла документсем ҫук. Чӑваш АССР Коммунальнӑй хуҫалӑх министерстви те (министрӗ Волков юлташ) проектсемпе сметӑсем хатӗрлес тӗлӗшпе юлса пырать.

Чылай стройкӑсенче социализмла ӑмӑртӑва ертсе пырас ӗҫре формализма пӗтермен. Стройкӑсенчи партипе профсоюз организацийӗсем социализмла ӑмӑртӑва ҫителӗксӗр ертсе пыраҫҫӗ, стахановецсен малта пыракан меслечӗсене япӑх сараҫҫӗ. Стройкӑсенче строительствӑпа монтаж ӗҫӗсене пысӑк пахалӑхпа тӑвассишӗн, строительство хакне йӳнетессишӗн, перекетлӗхшӗн, тупӑша ӳстерессишӗн тимлӗн кӗрешмеҫҫӗ.

Нумай стройкӑсенче партилле-политикӑлла тата партилле-организацилле ӗҫ ҫӳлти пусӑмра тӑмасть. Стройкӑсенчи комсомол организацийӗсен ӗҫӗнче те ҫитменлӗхсем нумай. 1953 ҫулхи строительство планне тултарма ҫав ҫитменлӗхсене хӑвӑртрах пӗтермелле.

Хуҫалӑх руководителӗсен хӑйсен ӗҫне тӗпрен ҫӗнетсе лайӑхлатмалла, йывӑр ӗҫсене механизацилеме, пуян техникӑпа туллин усӑ курма, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерме, строительствӑпа монтаж ӗҫӗсен пахалӑхне лайӑхлатма, материалсемпе укҫа-тенке перекетлеме тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнмалла. Кашни стройкӑра, участокра кӑтартуллӑ йӗркелӗх пултӑр, ӗҫ дисциплини ҫирӗпленсе пытӑр, кашни рабочи тухӑҫлӑ ӗҫлетӗр. Материалсем кӳрсе килес тата вӗсене рабочисем патне ҫитерсе парас ӗҫе лайӑхлатмалла. Руководительсем ӗҫе ҫӗнӗрен рабочисем илес, вӗсене воспитани парас, техникӑна вӗрентес, пурӑнма тата культурӑлла канма лайӑх майсем туса парас тӗлӗшпе хӑйсен ответлӑхне ӳстерме тивӗҫлӗ.

Республикӑри министерствӑсен, управленисен, трестсен тата предприятисен стройкӑсене проектсемпе сметӑсем тата оборудовани вӑхӑтра тӑратмалла. Проект тӑвакан кантурсен проектсемпе сметӑсене лайӑхрах тума тӑрӑшас пулать.

Строительство планне ӑнӑҫлӑ тултарса пырасси вырӑнти материалсем ҫителӗклӗ пулнинчен те нумай килет. Халӗ кирпӗч, чул тата ытти материалсем ҫитменни стройкӑсене пысӑк чӑрмав кӳрет. Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗ ҫумӗнчи Строительство материалӗсем тӑвакан промышленность управленийӗн, Вырӑнти промышленность министерствин, Чӑвашпромсоветӑн тата строительство материалӗсем тӑвакан предприятисен руководителӗсен ҫулталӑкри производство планне тултарма, продукци пахалӑхне лайӑхлатма мерӑсем йышӑнас пулать. Предприятисен шалти резервӗсемпе туллинрех усӑ курмалла, продукци ытларах туса кӑлармалла, ҫӗнӗ йышши материалсем туса кӑларма тытӑнмалла.

Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗ 1953 ҫулхи Майӑн 1-мӗшӗ ячӗпе чӗнсе каланисене совет ҫыннисем чунтан-чӗререн ырласа йышӑнчӗҫ, парти чӗнӗвӗсем ҫине коммунизм строительствинче ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тунипе ответлеме сӑмах пачӗҫ. Республикӑри предприятисенче, стройкӑсенче, МТС-семпе колхозсенче Май уявӗ умӗнхи социализмла ӑмӑрту анлӑн сарӑлчӗ.

Хаҫатӑн ҫак номерӗнче «Легпромстройӑн» 11-мӗш трестӗнчи строительсен коллективӗ илнӗ социализмла обязательствисем пичетленсе тухаҫҫӗ. Ҫак патриотла пуҫарӑва республикӑри строительсем тулли кӑмӑлпа кӗтсе илесси пирки иккӗленмелли ҫук. Стройкӑсенчи партипе профсоюз организацийӗсем тата хуҫалӑх руководителӗсем строительствӑпа монтаж ӗҫӗсен ҫулталӑкри планне срокчен тата ирттерсе тултарассишӗн, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерессишӗн, малта пыракан техникӑна татти-сыпписӗр ӗҫлеттерессишӗн, строительство хакне йӳнетессишӗн, ҫуртсене, сооруженисене пысӑк пахалӑхпа тӑвассишӗн социализмла ӑмӑртӑва анлӑн сарса яма тивӗҫлӗ. Кашни строитель ӑмӑртӑва хутшӑнтӑр. Чи лайӑх каменщик, маляр, платник, арматурщик ятне илессишӗн вӑйлӑ ӑмӑрту пуҫлантӑр. Малта пыракан стройкӑсенче стахановла ӗҫлекен бригадӑсем, участоксем, сменӑсем сахал мар. Кун пек стахановла коллективсем кашни стройкӑрах пулччӑр. Кашни коллектив малта пыракан стройка ятне илме тивӗҫлӗ пулассишӗн кӗрештӗр.

Стройкӑсенчи парторганизацисен партилле-политикӑлла тата партилле-организацилле ӗҫе тӗпрен ҫӗнетсе лайӑхлатмалла, агитациллӗ-массӑлла ӗҫе вӑйлатмалла, самокритикӑпа аялтан килекен критикӑна анлӑ сармалла, ӗҫри ҫитменлӗхсене хӑюллӑн палӑртмалла, умра тӑракан задачӑсене чыслӑн пурнӑҫласа пыма коллективсене мобилизацилемелле. Кашни коммунист-строитель ыттисемшӗн примерлӑ пултӑр, ӗҫ хӑвӑртлӑхне ӳстерсе пыма, ҫитменлӗхсене пӗтерме активлӑ пулӑштӑр.

Стройкӑсенчи профсоюз организацийӗсем умӗнче пысӑк та ответлӑ задачӑсем тӑраҫҫӗ. Вӗсем социализмла ӑмӑртӑва организацилесе ертсе пырас ӗҫе лайӑхлатмалла, стахановецсен, новаторсен опычӗпе меслетне пӗтӗҫтерсе анлӑн сармалла, рабочисене воспитани парас, дисциплинӑна ҫирӗплетес, клубсемпе хӗрлӗ кӗтессен ӗҫне йӗркелес тӗлӗшпе тимлӗнрех ӗҫлемелле.

Ҫамрӑк строительсене воспитани парасси, вӗсене техникӑна хӑвӑртрах алла илме пулӑшасси — стройкӑсенчи комсомол организацийӗсен таса тивӗҫӗ. Кашни ҫамрӑк-строитель стахановецсен опычӗпе паллаштӑр, пур ӗҫе те пысӑк пахалӑхпа туса пытӑр, материалсене перекетлетӗр.

1953 ҫулхи строительство планне ӑнӑҫлӑ тултарасси — республикӑри мӗнпур парторганизацисен пысӑк та ответлӑ задачи. КПСС хула комитечӗсемпе райкомӗсен стройкӑсен ӗҫӗпе ытларах интересленмелле, унти парторганизацисене партилле-политикӑлла тата партилле-организацилле ӗҫе, социализмла ӑмӑртӑва ертсе пырас ӗҫе вӑйлатма куллен пулӑшса пымалла.

1953 ҫулхи строительство планне срокчен тултарассишӗн, пур ӗҫе те пысӑк пахалӑхпа тӑвассишӗн, материалсем перекетлессишӗн, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерессишӗн строительсем хушшинче социализмла ӑмӑртӑва анлӑн сарар!

П. ЧИЧИКИН,
КПСС обкомӗн промышленноҫпа транспорт пайӗн заведующийӗ.

Вырăссен генилле полководецĕ

Михаил Илларионович Кутузов вырăссен генилле полководецĕ пулнă.

Аслă Сталин 1941 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕнче Хĕрлĕ площадьре каланă историллĕ сăмахра, пирĕн çĕршыва пураннă паттăр ывăлсен ячĕсене каласа, Михаил Кутузов ятне те асăнчĕ. Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче СССР Верховнăй Совет Президиумĕ Кутузов орденĕ туса хучĕ (виçĕ степень). Кутузов орденĕпе Совет Çарĕн генералĕсемпе офицерĕсене Тăван çĕршывшăн кĕрешсе паттăр ĕçсем тунăшăн наградăлассĕ.

Михаил Илларионович Кутузов çар инженерĕн çемйинче çуралнă. Унăн ашшĕ хăй вăхăтĕнчи нумай вĕреннĕ çын пулнă. Кутузовсен çемйинчи ывăлсем патриотла туйăмпа пуранна. Çавна май пулас полководец та патриотла шухăшлакан çын пулса ӳснĕ. Михаил Илларионович çар ĕçне тата ытти наукăсене те лайăх вĕреннĕ.

Кутузов вăрçăра çарсене ертсе пырас ĕçе 50 çул хушши туса пынă. Вăл яланах вырăссен суворовла çар искусствин малта пыракан представителĕ пулнă. Пулас полководец малтанхи вăхăтра Александр Васильевич Суворов ертсе пынă çарта службăра тăнă. Кутузов Суворовăн шанчăклă ученикĕ кăна мар, унăн чаплă ĕçĕсене малалла туса пыракан пулнă. Каярахпа, 1812 çулхи Отечественнăй вăрçă çулĕсенче, Кутузов полководец ĕçĕсене йывăр лару-тăрура туса пынă.

Кутузов, 1764 çултанпа вăрçăсемпе походсенче пулса, пите пысăк опыт пухнă. Вăл туроксене хирĕç пулнă пысăк çапăçусене хутшăннă, Ун пек çапăçусем 1770 çулхи вăрçă вăхăтĕнче Рябая Могила, Ларге тата Кагул патĕнче, 1774 çулхи вăрçă вăхăтĕнче Алушта патĕнче, 1788 çулта Очаков патĕнче пулнă. 1790 çулхи декабрьте вăл, Суворов ертсе пынипе, Измаил крепоçне штурмланă çĕре хутшăннă. Измаил крепоçне штурмланă хыççăн та, туроксене хирĕç 1791 çулта пулнă çапăçусенче Кутузов нумай хут чапа тухнă, вăл çапăçусенче яланах паттăр та хăюллă пулнă.

М. И. Кутузов Наполеона çĕнтернĕ, çавăнпа тĕнче историне кĕрсе юлнă. Кутузов полководец ĕçĕсене историри улшăну тапхăрĕнче — феодализм ишĕлсе пыма пуçланă, Францире буржуалла революци çĕнтернĕ тапхăрта туса пынă.

Вырăс çарне ертсе пынă Кутузов 1805 çулхи вăрçă вăхăтĕнче Наполеон çарĕсемпе малтанхи хут тĕл пулнă. Наполеон çарĕ вырăс çарĕнчен темиçе хут пысăкрах пулнă пулин те, Кутузов, чаплă марш-маневр туса, Кремс патĕнче французсен уйрăм корпусне аркатса тăкнă, çапла вара контрнаступлени тумалли плана пурнăçлама услови хатĕрленĕ. Анчах I-мĕш Александр патша ку ĕçе тĕлсĕр хутшăннă пирки Кутузов планне пурнăçлама май килмен.

1811 çулта Кутузов Дунай патĕнче туроксен çарне çĕмĕрсе тăкнă. Çапла вăл Наполеонăн агрессилле планне путлантарнă, — Наполеон вырăссен çарне хирĕç икĕ енчен — хăйĕн çарĕпе тата туроксен çарĕпе пырса çапма шутласа хунă пулнă. Генилле полководец Кутузов Рущук патĕнче туроксен пысăк çарне — вырăс çарĕнчен виçĕ хут пысăкрах пулнă çара—хупăрласа илсе çĕмĕрсе тăкнă.

1812 çулхи Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче Кутузов чаплă полководец пулни уйрăмах туллин палăрнă.

Пĕтĕм тĕнчере пуç пулса тăрас тесе каппайнă Наполеон, 600 пин çынлă çар пухса, пирĕн Тăван çĕршыв çине килсе тапăннă. Наполеон çарĕсене хирĕç хăватлăн çапăçса, вырăс çарĕ çĕршыв варринелле чакса пынă. Çакăн пек лару-тăрура, общественность хĕснĕ пирки, патшан

М. И. Кутузов вилнĕренпе 140 çул çитнĕ май

ирĕксĕрех М. И. Кутузова главнокомандующи пулма уйăрса лартмалла пулнă. Аслă полководец, ютран килсе тапăннă тăшмансенчен çĕршыва сыхласа хăвармалли питĕ ответлă задачăна асра тытса, контрнаступлени тума стратегилле план туса хатĕрленĕ.

Çав плана Кутузов питĕ çине тăрса пурнăçласа пынă. Вăл тăшман çарĕсен тĕп ушкăнне хирĕç кĕрешессине организациленĕ, вырăс çарĕ валли резервсем хатĕрлессине анлăн сарса янă, партизансене пулăшнă, вĕсене хĕçпăшал парса тăнă.

Маневрсем питĕ ăста туса, Кутузов тăшмана хавшатса пынă, ăна вăйлăн пыра-пыра çапнă. Çав вăхăтрах вырăс çарĕсен кĕрешӳ пултарулăхне пĕртте чакарман. Активлă оборонăра тăшман çарĕсене хавшатса пырса, аслă полководец августăн 26-мĕшĕнче Бородино патĕнче Наполеон çарĕсене хирĕç çапăçу пуçласа янă. Çав çапăçура вырăс çарĕсем калама çук пысăк паттăрлăхпа тата çар ĕçне лайăх пĕлсе çапăçнă. Кутузов, французсен чи лайăх дивизийĕсене аркатса тăкса, Наполеон çарне вăйсăрлатнă.

Тăшманăн ударнăй çарĕсене вăйсăрлатнă хыççăн, Кутузов Бородино хирĕнче малалла çапăçма шутланă. Анчах, лару-тăрува питĕ тĕплĕ хак панă хыççăн, вăл хăйĕн çарĕсене каялла чакма приказ панă, çапла контрнаступлени тума хатĕрленсе çитме, тăшман çарĕсенчен вăйлăрах çар пухса çитерме шутланă. Генилле полководец вăрçăри пĕтĕм ĕçе тăшман çарне пĕтерсе тăкас, çапла вара Тăван çĕршыва çăлса хăварас тĕллевпе туса пынă.

Кутузов приказне пурнăçласа, çарсем Мускавран тухнă. Аслă полководец, Тарутино патне марш-маневр туса, контрнаступлени тума хатĕрленсе çитнĕ. Вырăс çарне резервсем пынă. Çар ретне сĕнĕрен 181 пин çын илнĕ тата ополченецсем 200 пин çынна яхăн пухнă. Çапла вара çĕнĕ дивизисем тунă, Наполеон çарĕсене Мускавра хупăрласа илнĕ, тăшман вăйне хавшатса çитернĕ. Контрнаступлени тума хатĕрленнĕ вăхăтра партизансемех ютран килсе тапăннă çарти çынсене 30 пин çын ытла вĕлернĕ.

Контрнаступлени пуçласа яма хатĕрленсе çитнĕ хыççăн, Кутузов тăшман çарĕсене темиçе хутчен пыра-пыра çапнă. Тарутино тата Малоярославец патĕнче тăшман поражени тӳснĕ хыççăн, вăрçă хирĕнче Кутузов шутласа хунă ĕçсене пурнăçлама тытăннă. 1812 çулхи октябрьте тăшмана вырăс çĕрĕ çинчен хăваласа кăларма пуçланă. Вязьма, Смоленск, Красный патĕнчи, Березина юханшывĕ хĕрринчи çапăçусенче французсен çарĕсене аркатса тăкнă. Наполеон хăйĕн çарĕсене пăрахса Парижа вăрттăн тарнă. Вильно хулинчен Кутузов савăнса çапла пĕлтернĕ: «Тăшмана пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă май вăрçă чарăнчĕ».

1812 çулхи Отечественнăй вăрçă Кутузовăн çар искусстви Наполеонăн çар искусствинчен нумай малта тăнине кăтартса панă. Наполеон çарне Европăра никам çĕнтереймен çар тесе шутланă пулсан, ăна вырăс çарĕ аркатса тăкнă.

Кутузов ертсе пынă çар задачисем тĕрĕслĕхлĕ вăрçă тĕллевĕнчен тухса тăнă. Çав вăхăтрах Наполеонăн стратегийĕ тĕнчере пуç пулса тăрассишĕн кĕрешмелли авантюристла плансене палăртса тăнă.

Кутузов, вăрçă характерĕпе тĕллевĕсене тĕрĕс палăртса, стратегилле задачăна пурнăçлама тĕрĕс май тупнă. Вăл контрнаступлени тума стратегилле тĕрĕс план хатĕрленĕ. Çав план лару-тăрăва тĕрĕс шута илнĕ, вырăс çарĕсене вăрçăра çĕнтерме май панă. Вырăссен аслă полководецĕ вырăс салтакĕсене вăйлă тăшмана хирĕç паттăр çапăçма хавхалантарса пынă. М. И. Калинин каланă тăрăх, пĕтĕм тĕнчипе паллă полководецсем стратегипе тактика мастерĕсем кăна мар пулнă. Вĕсем салтаксене, хăйсен çарĕсене хавхалантарма пĕлнĕ. Вĕсене салтаксем чĕререн шанса тăнă.

1812 çулхи Отечественнăй вăрçă тĕрĕслĕхлĕ вăрçă пулнă май вырăс çарĕ мораль тĕлĕшĕнчен французсен çарĕнчен вăйлăрах пулнă. Çакă Кутузова тăшмана çĕнтерме пулăшнă. Çавăнпа Кутузовăн полководецла талантĕпе ăсталăхĕ вăрçă хирĕнче чаплăн пурнăçланнă. Бородино хирĕнче тата ытти çапăçусенче те вырăс çарĕсем чапа тухнă.

1812 çулхи Отечественнăй вăрçă Кутузовăн тактики Наполеонăн тактикинчен нумай малта тăнине те кăтартса панă.

Хăйĕн авалхи ывăлĕсем паттăр ĕçсем тунине вырăс халăхĕ яланах асра тытса пурăнать, вĕсен чапне ӳстерме тăрăшать. Совет çыннисем, Коммунистсен партийĕ, аслă çулпуçăмăрсем Ленинпа Сталин ертсе пынипе, хамăрăн Тăван çĕршыва граждан вăрçи вăхăтĕнче Америкăпа Англи интервенчĕсем тата ытти интервентсем килсе тапăннинчен, çавăн пекех çĕршыври шалти контрреволюци тапăнăвĕсенчен те сыхласа хăварчĕç. Совет Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕн воинĕсем генилле полководец И. В. Сталин ертсе пынипе Аслă Отечественнăй вăрçăра питĕ пысăк паттăрлăхпа тăшмана хирĕç çапăçрĕç, хамăрăн совет Тăван çĕршыв çине империалистсем иккĕмĕш хут килсе тапăннине аркатса тăкрĕç, халăхсене фашизм чуралăхĕн хăрушлăхĕнчен çăлса хăварчĕç. Совет Çарне иртнĕ вăрçăра çавăн пек чаплă та пысăк çĕнтерӳ тума тĕнчери чи малта пыракан сталинла çар наукипе хĕçпăшалланни пулăшрĕ.

Аслă Сталин кăтартса хăварнисене пурнăçласа коммунизм чаплă çуртне тăвакан, ССР Союзĕн—пĕтĕм тĕнчери мир тĕрекĕн — оборона хăватне ӳстерсе пыракан совет халăхĕ вырăссен чаплă патриочĕсен ячĕсене яланах асра тытса пурăнать. Чаплă патриотсен ячĕсем хушшинче Михаил Илларионович Кутузов ячĕ яланах çуталса тăрать.

Н. ЦАРЕВ,
полковник, истори наукисен кандидачĕ.

Вĕренекенсене практикăлла ĕçе хăнăхтарасси çинчен

Ялти шкулсенче вĕренекенсене политехникăлла пĕлӳ парас ĕçре биологи урокĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Вĕренекенсене биологи урокĕсенче ялхуçалăх производствипе тĕплĕнрех паллаштарма тăрăшмалла. Çапла тăвас тесен, вĕренекене практикăпа çыхăнтарса пыни кирлĕ.

Шкулсем çумĕнче опытсем тумалли участоксем пур. Тĕрлĕрен ӳсентăрансемпе пахча çимĕçсем ӳстерсе, вĕренекенсем унта ялхуçалăх ĕçĕсене, агротехника правилисене пурнăçлама хăнăхса пыраççĕ. Биологи вĕрентекен учительсен участокра кăçал туса иртермелли ĕçсене халех палăртмалла. Çав ĕçсен планне учительсемпе тата дирекципе пĕрле пăхса тухса çирĕплетмелле.

Эпир хамăр шкулта ачасене участокра ĕçлеме кĕркуннехи тата хĕлхи вăхăтрах вĕрентсе пыратпăр. Çак ĕçе çамрăк натуралистсен кружокĕ туса пырать, унăн занятийĕсем расписани тăрăх, уйăхра икĕ хут пулаççĕ. Çамрăк натуралистсен кружокĕнче 20 ача вĕренет. Унта çамрăк пахчаçăсен, чечексем ĕрчетекенсен, улма-çырла йывăççисем ӳстерекенсен, тырпул ӳстерес тĕлĕшпе сăнавсем тăвакансен, пурçăн хурчĕ ĕрчетекенсен секцийĕсем пур.

Вĕренекенсем кăçал 0,40 гектар çинчи садра сăнавлă ĕçсем тума пуçлаççĕ. Çак сада 1943 çулта лартса хăварнă. Унта халĕ улмуççисемпе грушăсем 150 тĕп. Кунсăр пуçне, садра чие çырли, хăмла çырли, хура хурлăхан, виноград ĕрчететпĕр.

Пахча çимĕçсем лартса тума 460 тăваткал метр, уй-хирте акса тăвакан культурăсем валли 456 тăваткал метр çĕр уйăрнă. Çав лаптăк çинче çичĕ уйлă пусă çавранăшĕ тунă. Вĕренекенсем унта тырăсемпе курăксем мĕнле черетленсе пынипе паллашаççĕ. Улма-çырла йывăççисем ӳстермелли питомник — 150 тăваткал метр, тĕрлĕ ӳсентăрансене акса тумалли коллекционнăй участок 87 тăваткал метр лаптăк йышăнаççĕ.

Пирĕн шкулта «чĕрĕ кĕтес» пур. Унта нумай тĕрлĕ ӳсентăрансем пурри V-мĕш класра вĕренекенсене ботаникăна тĕплĕн ăнланма, практикăлла ĕçсем туса иртерме май парать. Сăмахран, мартăн 15-мĕшĕнче «Йывăççене сыпни» темăпа урок иртертĕм, çавăн чухне лимон йывăççине папакпа тата турат татăкĕпе мĕнле сыпмаллине кăтартрăм. Пĕлтĕрхи çуркунне шурă чечеклĕ герань туни çине хĕрлĕ чечеклĕ геранĕн папакне сыпнăччĕ. Çав геранĕн чечекĕсем урăхла çуралаççĕ, вĕсем шупка пулаççĕ. Мартăн 31-мĕшĕнче «Т. Д. Лысенко академик ĕçĕсем ялхуçалăхне усă кӳни» тема тăрăх урок иртертĕм. Урокра кĕрхи ыраштан çурхи ыраш тумалли опытлă ĕçсемпе паллаштартăм. Пĕр килограмм таран ыраш яровизацилеме хутăмăр. Çак ыраш виççĕмĕш çул яровизациленсе акăнать. Пĕлтĕр çуркунне сăнав участокĕнче акса тунă çурхи ыраш тухăçлăхĕ, пĕр гектар çине куçарса шутласан, 20 центнер пулчĕ.

Эпир VI—VII-мĕш классенче зоологи вĕренекенсене те практикăлла ĕçсемпе паллаштарма тăрăшатпăр, экскурсисем час-часах иртеретпĕр. Сăмахран, мартăн 24-мĕшĕнче «Пурçăн хурчĕ» темăпа VI-мĕш класра урок иртертĕм. Вĕренекенсене пурçăн хурчĕн амине, ăçине, хурт çăмартисене кăтартрăм. Николай Иванов вĕренекен пурçăн хурчĕсем ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлет. Вăл урокра хăйĕн пĕлтĕрхи сăнавлă ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ. Вăл иртнĕ çулта килте ĕрчетнĕ пурçăн хурчĕн коконĕсене пĕр килограмм пухса шкула пачĕ.

Сăнавлă участокра ĕçлеме тахçанах тытăнтăмăр. Мартăн 23-мĕшĕнче теплицăра сухан лартса хăвартăмăр. Çулçăллă сухан туса илнĕ хыççăн кунта «Корнеевский» сортлă томат лартатпăр. Çак томатăн çимĕçĕ пĕр килограмм таран таякан пулать. Томат калчисене кăларса лартнă хыççăн, теплицăра виноград турачĕсене касса лартса йышлăн тымарлантаратпăр. Теплицăн стенисем çумĕпе чечек тата пахча çимĕç вăррисем акнă ещĕксем лартса тухрăмăр. Теплицăна виноградăн пĕр-пĕринпе сыпнă турачĕсене тата лимон йывăççин турачĕсене тымарлантарма нумай хутăмăр.

Шкулта 16 рамăллă парник пур. Унта та ĕçсем пуçланчĕç. Парниксенчи тăпрана паха йышши ялхуçалăх культурисемпе пахча çимĕç вăррисем акма хатĕрлесе çитертĕмĕр. Çак ĕçсене пурне те вĕренекенсем туса пыраççĕ. Сывăх вăхăтрах вĕренекенсем виноград, инжир, чие çырли, слива, груша йывăççисен тата улмуççисен çĕнĕ сорчĕсене ӳстерес тĕлĕшпе сăнавлă ĕçсем тума пуçлаççĕ. Шкул участокĕнчи питомникра икĕ çулхи улмуççипе грушăсем 200 тĕп, чие тата слива йывăççисем 100 тĕп ытла. Кусене сыпмашкăн И. В. Мичурин ячĕпе тăракан генетика лабораторийĕнчен паха сортлă улма-çырла йывăççисен турачĕсем çырăнса илтĕмĕр.

Кăçал çамрăк натуралистсемшĕн çĕнĕ ĕç—пулă ĕрчетесси пуçланать. Шкул территорийĕнчи çырмана пĕвелесе, иртнĕ кĕркунне унта 5 килограмм карас янăччĕ. Пĕве 75 метр тăршшĕ, унăн тарăнăшĕ икĕ метр çурă.

Вĕреннине практикăлла ĕçсемпе çыхăнтарса пыни хальхи вăхăтра—экзаменсене хатĕрленнĕ тапхăрта—пысăк вырăн йышăнать. Çавăнпа та естествознани вĕрентнĕ чухне иртерекен практикăлла ĕçсенче учитель малтан вĕреннисене аса илтерме пĕлни, малтан туса иртернĕ ĕçсем çинчен тĕплĕн ăнлантарса пани кирлĕ.

Практикăлла ĕçсене тĕрĕс иртерес пулсан, учителĕн хăйĕн малта пыракан агробиологи наукине лайăх пĕлсе пулать.

Шкулсем çумĕнчи участоксенчи ĕçсене срокра тата агробиологи науки вĕрентнĕ тăрăх туса пыма тĕплĕн хатĕрленес пулать.

Пирĕн шкул «Дружба» колхозпа тачă çыхăну тытать. Шкул ачисем кăçал колхоз питомникĕнче ĕçлеме, колхоза хура хурлăхан тата виноград турачĕсем лартса пама, колхоз клубĕ умĕнче тĕрлĕ чечексем ӳстерме хатĕрленеççĕ.

Кăçал эпир район центрне йывăç лартса илемлетес ĕçре пулăшма шутлатпăр.

Н. УСОВ,
Советски районĕнчи Килтĕшри çичĕ çул вĕренмелли шкулти биологи учителĕ.

АСЛĂ ÇУЛПУÇĂН ПРОИЗВЕДЕНИНЕ ВĔРЕНЕÇÇĔ

ИШЛЕЙ. И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенине вĕренес тĕлĕшпе районта тăвата кружок ĕçлет. Партипе совет активĕпе семинарлă занятисем иртереççĕ, унта 44 çын çӳрет. Кунсăр пуçне аслă çулпуçăн çак произведенине 150 коммунист харпăр хăй тĕллĕн вĕренет.

Партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсемпе И. В. Сталинăн генилле произведенине вĕренме коммунистсене парти райкомĕн библиотеки пысăк пулăшу парать. Кунта кашни эрнерех лекцисемпе докладсем пулаççĕ.

Ф. МАЛЫШКИН.

Юлашки почтăран

Йăнăш кăтарту

Апрелĕн 23-мĕшĕнче тухнă номерте районсенчи хаçатсем КПСС Центральнăй Комитечĕ 1953 çулхи Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе чĕнсе каланисене пичетлесе кăларчĕç. Ишлей районĕнчи «Колхозник хаçачĕ» вара ун пек тума шутламарĕ. Вăл ку номерĕн пĕррепĕш страницине «районти колхозсене кĕрхи тырăсен калчисене апатлантарасси(?) мĕнле пынине кăтартакан сводкăпа», ытти вак-тĕвек материалсемпе, «Правда» хаçат пресс-бюровĕн «Вăрлăха ăшăтса акасси—агротехникăлла паха меслет» ятлă статьипе, иккĕмĕш страницине Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозран килнĕ çырусемпе тултарчĕ.

Çырусенче Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз партин XIX-мĕш съезчĕ ялхуçалăх умне лартнă задачăсене ăнăçлă пурнăçлас тĕлĕшпе пилĕкçуллăхăн юлашки виçĕ çулĕ хушшинче тумалли ĕçсем çинчен каласа панă.

Ку аван. Анчах хаçат редакцийĕ ку ĕçе те тимсĕр тунă. Колхоз председателĕн Г. Херсонов юлташăн статьинче çакăн пек вырăн пур:

«Сураки ĕçĕсене вĕçленĕ хыççăн колхоз кирпĕч тăвас, чул кăларса хатĕрлес ĕçсене тытăнать. Кăçал сахалтан та 20 пин штук кирпĕч, 100 кубометр чул кăларатпăр».

Г. М. Маленков юлташ партин XIX-мĕш съездĕнче тунă докладра çапла каланине хаçат редакторĕ манни курăнать:

«...Нумай колхозсемпе совхозсенче кирпĕч, черепица тата промышленноçăн ытти япалисене туса хатĕрлекен хушма предприятисем уçас практика анлăн сарăлнă. Опыт кăтартса панă тăрăх, çакă вăл строительство материалĕсен тата промышленность япалисен хакне ӳстерет тата—çак практикăн чи пысăк çитменлĕхĕ вăл—колхозсемпе совхозсене ялхуçалăх продукцийĕн производствине ӳстерес задачăсене татса парас ĕçрен пăрса ярать, ялхуçалăхне аталантарас ĕçе чăрмантарать».

Çапла ĕнтĕ, хаçат редакцийĕ партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене пурнăçлассишĕн кĕрешес чухне йăнăш кăтартусем парать.

Кантăр тухăçне ӳстерессишĕн

ЧУРАЧĂК. Районти «Победа» колхоз çулсерен кантăр нумай акса пысăк тупăш илет. Вăл иртнĕ çулта 13 гектар çинчен кашни гектартан 7,43 центнер кантăр вăрри, 3,4 центнер сӳс туса илчĕ. Государствăна кантăр вăрри памалли плана 430 процент тултарчĕ. Çакăншăн колхоз 38.278 тенкĕ укçа, 150 центнер тулă, 14 центнер турантă илнĕ.

Тухăçлă кантăр вăрри тата сӳс туса илес тесе, колхоз агротехникăлла ĕçсене вăхăтра тата тĕрĕс пурнăçласа пырать. Кантăр акмалли çĕре кĕркунне тракторпа предплужникла плугсемпе 20—22 сантиметр тарăнăш сухаланă тата гектар çине 20—30-шар тонна çĕрнĕ тислĕк тăкнă. Çуркунне вара кантăр акмалли лаптăка йывăр сӳрепе икĕ хут сӳрелеççĕ. Кантăр калчине минераллă удобренисемпе апат параççĕ.

Кăçал 20 гектар çине кантăр акса хăварма хатĕрленеççĕ. Кантăр вăррине кĕркуннех тасатса хунă.

— 1953 çулта кашни гектартан 5-шер центнер кантăр вăрри тата сӳс илессишĕн тăрăшатпăр,—тет бригадир И. Григорьев юлташ.

А. АФАНАСЬЕВ,
агроном.

Плана кашни предприяти тăтăшах тултарса пытăр

Республикăри промышленноçра ĕçлекенсем, пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле, пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана срокчен тата иртерсе тултарассишĕн хăйсен вăйĕсене шеллемесĕр кĕрешеççĕ. Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ йышăннă историллĕ решенисем, И. В. Сталин юлташăн генилле произведенийĕсем совет çыннисене коммунизм строительствинче çĕнĕрен те çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантараççĕ. Рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем хăватлă техникăна татти-сыпписĕр ĕçлеттермелли, шалти резервсемпе туллин усă курмалли, государство заданийĕсене чыслăн пурнăçласа пымалли паха майсем тупаççĕ, технологи процесне çĕнетсе лайăхлатаççĕ. Юлашки вăхăтра предприятисенче стахановецсен, рационализаторсемпе изобретательсен хисепĕ чылай ӳсрĕ.

Кăçалхи пĕрремĕш кварталта республикăри чылай предприятисем производство планне ăнăçлă тултарчĕç, продукци пахалăхне лайăхлатрĕç, ĕç тухăçлăхне ӳстерчĕç. Уйрăмах Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завод коллективĕ пысăк çĕкленӳпе ĕçленине палăртас пулать. Завод продукци туса кăлармалли кварталти плана 11 процент иртерсе тултарчĕ, 1952 çулхи пĕрремĕш кварталтипе танлаштарсан, 41 процент ытларах продукци туса кăларчĕ. Завод плана пĕтĕмĕшпе çеç мар, заданире палăртнă пур тĕп изделисем енĕпе те пурнăçларĕ.

Куславккари çуртсем тăвакан завод кварталти планран иртерсе пĕр пин çын ытла пурăнмаллăх çурт, 2.406 тăваткал метр паркет туса кăларнă. Çĕмĕрлери йывăç япаласем тăвакан заводпа Сеçновккăри хăма çуракан завод пĕлтĕр япăх ĕçлерĕç, государство планне кварталтан квартала тултарса пыраймарĕç. Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ кăтартса панисене пурнăçласа, çак заводсем хăйсен ĕçне чылай лайăхлатрĕç, кварталти плана срокчен тата иртерсе тултарчĕç.

Çĕмĕрлери экстракт тăвакан «Большевик» заводра чĕртавар, топливо, электроэнерги перекетлĕссишĕн, продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн вăйлă кĕрешӳ пырать. Пĕр тикĕс, график тăрăх ĕçлесси ку завод коллективĕн йăлине кĕнĕ. Заводра ĕç нормине тултарман рабочи çук, кашни виççĕ рабочирен иккĕшĕ стахановец е ударник. Улатăрти махорка фабрики, Етĕрнери спирт завочĕ, Элĕкри сӳс-кантăр, Пăрачкаври тата Миренкăри йĕтĕн завочĕсем, Кирери рыблеспромкомбинат, союзла министерствăсене пăхăнса тăракан тата ытти хăшпĕр предприятисем те пĕрремĕш кварталти плана ăнăçлă тултарчĕç.

РСФСР министерствисене пăхăнса тăракан предприятисенчен Шупашкарти лента тĕртекен фабрика паха тĕслĕхсем кăтартнине палăртас пулать. Вăл плана пĕтĕмпе тата çирĕплетнĕ ассортимент тăрăх иртерсе тултарнă. 1952 çулхи пĕрремĕш кварталтипе танлаштарсан, 78 процент ытларах продукци туса кăларнă. Çăкăр трестчĕ тата Шупашкарти хĕрлĕ эрех тăвакан комбинат плана пĕтĕмпе тултарнă, анчах вĕсен ĕçĕнче пĕр çитменлĕх пулнă: вĕсем задание хăшпĕр йышши изделисем енĕпе пурнăçлайман.

Чăваш АССР министерствисемпе ведомствисене пăхăнса тăракан предприятисем, пĕтĕмĕшпе илсен, продукци туса кăлармалли кварталти плана тултарнă. Чăваш АССР Апат-çимĕç промышленность министерстви, Коммунальнăй хуçалăх министерстви, Чăвашпромсовет, Чăвашкоопинсоюз, Чăваштарпромсоюз продукци туса кăлармалли плана пĕтĕмĕшла тултарнă. Вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕнчи хăшпĕр предприятисемпе артельсем çĕнĕ йышши япаласем туса кăларма тытăннă, ĕççыннисен кулленхи ыйтăвĕсене тивĕçтерекен мастерскойсем уçнă. Нумай предприятисенче социализмла ăмăртăва ертсе пырас, кадрсен пĕлĕвне ӳстерес ĕçе лайăхлатнă. И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенине вĕренсе, хуçалăх руководителĕсем, плановиксемпе бухгалтерсем экономикăлла ыйтусемпе тĕплĕнрех интересленме тытăнчĕç, предприятисенче хуçасăрлăх чакрĕ.

Республикăри промышленноçăн государство заданийĕсене пурнăçласа пыма мĕн кирли пурте çителĕклĕ. Кашни предприяти хăватлă техникăпа хĕçпăшалланнă. Вăрçă хыççăнхи çулсенче техникăна алла илнĕ, пуçарулла кадрсем ӳссе çитĕнчĕç. Фабрикăсемпе заводсене чĕртавар, топливо, электроэнерги çителĕклĕ уйăрса параççĕ. Халĕ ĕнтĕ ĕç çакăнта: çав майсемпе пуринпе те пĕтĕмпех усă курмалла, ĕçри çитменлĕхсене татăклăнах пĕтерсе пымалла, производствăра халиччен усă курман резервсене тупмалла, вĕсене халăх хуçалăхне вăйлатакан хăватлă çăлкуçĕ туса хумалла.

Лайăх ĕçлекен предприятисен хӳттинче чылай министерствăсен, ведомствăсен тата предприятисен начар ĕçĕ пытанса юлать. Пĕрремĕш кварталта Вырăнти промышленность министерстви, Вырăнти топливо промышленность управленийĕ, «Чăвашвăрман» тресчĕ, «Чăвашлесдрев» трест, Чăвашдревпромсоюз, пулă тресчĕ çителĕксĕр ĕçлерĕç. Союзла министерствăсемпе РСФСР министерствисене пăхăнса тăракан предприятисенчен Канашри вагонсем юсакан завод, Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбиначĕ, Сĕнтĕрвăрринчи спирт завочĕ, Вăрмарти сĕтел-пукан фабрики уйрăмах юлса пынине палăртас пулать.

Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбиначĕ продукци туса кăлармалли кварталти плана 77 процент çеç тултарнă, Тăван çĕршыв умĕнче пысăк парăма кĕнĕ. Комбинатри нумай цехсем пĕр тикĕс ĕçлемеççĕ, шалти резервсемпе лайăх усă курмаççĕ. Партбюро, завком тата хуçалăх руководителĕсем ĕçри çитменлĕхсемпе чăрмавсене пĕтерме коллектива кирлĕ пек мобилизацилемеççĕ.

Канашри вагонсем юсакан завод январьпе февраль уйăхĕсенче питĕ япăх ĕçлерĕ, çавăн пирки кварталти плана тултараймарĕ. Дирекци, партбюро тата завком хуçасăрлăха хирĕç тимлĕн кĕрешмеççĕ, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетессишĕн социализмла ăмăртăва сарма тăрăшмаççĕ. План тăрăх продукцин хăйне ларакан хакне 4,2 процент йӳнетмелле пулнă. Завод продукцин хăйне ларакан хакне 10,6 процент хăпартнă, государствăна пысăк сиен кӳнĕ, материалсемпе çӳрма фабрикатсем нормăран иртерсе нумай расходланă, брак чылай тунă. Чылай рабочисем ĕç нормине тултармаççĕ, дисциплина çӳлти пусăмра тăмасть.

Уйрăмах «Чăвашвăрман» тресчĕ япăх ĕçленине палăртас пулать. Вăл пĕрремĕш кварталта халăх хуçалăхне 80 пин кубометра яхăн ĕçе юрăхлă йывăç парса çитереймен. 14 вăрманпромхозран пĕри çеç кварталти плана тултарнă. Вăрманпромхоз руководителĕсен ĕçĕнчи тепĕр пысăк çитменлĕх вăл—продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетессишĕн, хуçасăрлăха пĕтерессишĕн, хăватлă техникăна лайăх ĕçлеттерессишĕн тимлĕн кĕрешменни. Çавăн пирки треста пăхăнса тăракан предприятисем 1952 çулта продукцин хăйне ларакан хакне 18 миллион тенкĕлĕх хăпартнă. Кăçалхи пĕрремĕш кварталта та вăрманпромхозсем перекетлĕхшĕн кирлĕ пек кĕрешмен. Трест предприятисен экономикипе тĕплĕн интересленмест, хуçалăх расчетне çирĕплетме тăрăшмасть, руководительсем финанс дисциплинине сĕмсĕррĕн пăсса пынипе килĕшсе тăрать.

«Чăвашлесдрев» трест кварталти плана 78 процент çеç тултарнă, коммунизмăн аслă стройкисене, машинăсем, вагонсем тăвакан заводсене тата ытти предприятисене 10 пин кубометр ытла хăма парса çитереймен. Треста пăхăнса тăракан предприятисенчен Буински хăма çуракан завод çеç кварталти производство планне тултарнă. Трест тата предприяти руководителĕсем оборудование лайăх ĕçлеттерессишĕн, чĕртаварпа тĕрĕс усă курассишĕн япăх кĕрешеççĕ. Çавăн пирки пĕлтĕр трест 4 миллион тенкĕ ытла убыток тунă. Çак пысăк çитменлĕхрен трест управляющийĕ Кормачев юлташ тивĕçлĕ вывод туман. Треста пăхăнса тăракан нумай предприятисем кăçал та тупăш илмелли задание пурнăçласа пымаççĕ.

Чăваш АССР Вырăнти промышленность министерствипе Апат-çимĕç промышленность министерстви тата Чăвашпромсовет юлса пыракан предприятисемпе промартельсене япăх пулăшаççĕ, малта пыракан коллективсемпе стахановецсен опытне пĕтĕçтерсе сармаççĕ, йывăр ĕçе механизацилеме, технологи процесне çĕнетсе лайăхлатма тăрăшмаççĕ. Вырăнти промышленность министерствине пăхăнса тăракан 47 предприятирен 25 предприяти, Апат-çимĕç промышленность министерствине пăхăнса тăракан 40 предприятирен 15 предприяти кварталти плана пĕтĕмĕшпе те тултарманни, чылайăшĕ ассортиментшăн кĕрешменни асăннă министерствăсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхе уççăн кăтартса парать. Юлашки вăхăтра Шупашкарти тир-сăран комбиначĕ тата тумтир çĕлекен индпошив мастерскойĕсем хăйсен ĕçне вăйсăрлатрĕç.

Чăвашпромсовета, Чăвашдревпромсоюза, Чăваштарпромсоюза тата Чăвашкоопинсоюза пăхăнса тăракан промартельсенчен чылайăшĕ плана çирĕплетнĕ ассортимент тăрăх тултарса пымаççĕ, продукци пахалăхĕшĕн япăх кĕрешеççĕ, ĕççыннисен ыйтăвĕсене лайăх тивĕçтермеççĕ. 1952 çулта Чăвашпромсовета пăхăнса тăракан промартельсем планпа палăртнинчен 1,4 миллион кирпĕч, 271 тонна известь, 51 тонна пăта сахалтарах туса кăларнă. Чăвашпромсовет председателĕн Маклашкин юлташăн хăшпĕр промартель руководителĕсем строительство материалĕсем туса кăларассине хакламаннине пĕтермелле. Вăрçăччен чылай промартельсем черепица туса кăларнă, халĕ пĕр артельте те çак производствăна йĕркелемен.

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съездĕнче Г. М. Маленков юлташ çапла каларĕ: «Государство планĕ вăл—закон. Предприятисен пурин те хăйсене панă государство заданийĕсене тултармалла, халăх хуçалăхне кирлĕ продукци çителĕклĕ туса кăлармалла. Хуçалăх руководителĕсен тата парти организацийĕсен плана кашни предприяти тăрăх валовăй продукци хисепĕ енĕпе кăна мар, государство планĕ тăрăх палăртнă мĕнпур япаласене туса кăларас тĕлĕшпе те обязательно тултармалла тăвас пулать, туса кăларакан продукци пахалăхне пĕрмаях лайăхлатса пымалла, предприятие йĕркеллĕ ĕçлеме чăрмантаракан сăлтавсене тупса, вĕсене пĕтĕмпех пĕтермелле». Г. М. Маленков юлташ калани пирĕн предприятисенчи партипе профсоюз тата хуçалăх организацийĕсемшĕн боевой программа пулса тăрать. Вĕсен производствăна тата социализмла ăмăртăва ертсе пырас ĕçе лайăхлатмалла, дисциплинăна çирĕплетмелле, шалти резервсене палăртма тата вĕсемпе туллин усă курма рабочисене, инженерсемпе техниксене мобилизацилемелле.

Халĕ пĕтĕм совет халăхĕ Май уявне ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илессишĕн хăйĕн вăйне шеллемесĕр кĕрешет. Республикăри рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем, парторганизацисем ертсе пынипе, хăйсен творчествăлла пуçарулăхне тата ытларах вăйлатĕç, социализмла ăмăртăва анлăн сарса, 1953 çулхи плана пур кăтартусем тăрăх та ăнăçлăн тултарĕç.

П. ПЛАТОНОВ.
В. СВЕШНИКОВ.

Корейăра перемири çинчен пыракан калаçусем

ПЕКИН, апрелĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран пĕлтернĕ тăрăх, Корейăпа Китай делегацийĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Сыхăну ушкăнĕсен апрелĕн 24-мĕшĕнче пулнă 9-мĕш ларăвĕнче икĕ енĕ çапла килĕшсе татăлнă: административлă сăлтавсем пирки икĕ енĕн делегацийĕсем тĕл пуласси апрелĕн 26-мĕшĕнче кăнтăрла 2 сехет тĕлне хăварнă.

ПЕКИН, апрелĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран çапла пĕлтерет:

Паян кăнтăрла 2 сехетре икĕ енĕн делегацийĕсен пĕрлехи ларăвĕ тепĕр хут пуçланнă. Корейăпа Китай енĕн делегацийĕн пуçлăхĕ генерал Нам Ир çак ларура заявлени тунă тата тыткăнри çар çыннисем çинчен тăракан пĕтĕм ыйтăва йĕркелесе ярас тĕлĕшпе çыхăнса тăракан конкретлă мероприятисем сĕннĕ. Аялалах генерал Нам Ир заявленине тата Корейăпа Китай енĕн сĕнĕвĕсене пичетлетпĕр.

Пирĕн енĕн командующийĕсем 1953 çулхи мартăн 28-мĕшĕнче çапла кăтартса пачĕç: икĕ енĕн тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене вăрçă ĕçĕсем пынă вăхăтра улăштарса илесси çинчен тăракан ыйтăва тĕрĕс татса пани тыткăнри çар çыннисем çинчен тăракан пĕтĕм ыйтăва татса пама çул хывмалла, çапла майпа, пĕтĕм тĕнчери халăхсем ĕмĕтленнине пурнăçласа, Корейăра перемири тăвасси патне çитмелле. Хальхи вăхăтра чирлĕ тата аманнă çар çыннисене улăштарса илесси пĕр чăрмавсăр пырать. Кунсăр пуçне пирĕн енĕ тыткăнри çар çыннисем çинчен тăракан пĕтĕм ыйтăва татса пама питех те паха конструктивлă сĕнӳ тăратрĕ. Çавăнпа та перемири çинчен калаçусем пуçласа яма тата икĕ енĕн делегацийĕсем тăрăшнипе Корейăра перемири туса хума тыткăнри çар çыннисем çинчен тăракан пĕтĕм ыйтăва татса пама вăхăт çитрĕ ĕнтĕ. Халĕ сирĕн енĕ апрелĕн 16-мĕшĕнче панă висĕ пунктран тăракан конкретлă сĕнӳсене пăхса тухнă хыççăн, эпир пирĕн енĕ тăратнă сĕнӳсене пурнăçлама икĕ енĕн делегацийĕсен ларăвĕсенче консультаци тумалли тата сӳтсе явмалли никĕс вырăнне хурса йышăнма хамăрăн мероприятисене сĕнесшĕн. Пĕтĕм тĕнче Корейăра перемири тăвассишĕн тăрать. Эпир çакна шанса тăратпăр: икĕ енĕ хушшинче консультаци тунипе тата сӳтсе явнипе тыткăнри çар çыннисене репатриаци тăвасси çинчен тăракан ыйтăва пĕтĕмпех тĕрĕс татса пама пулать. Çак ыйтăва татса паманни халĕ Корейăра перемири тăвассине кансĕрлесе тăрать. Икĕ енĕ те мир тăвассишĕн тата пĕр-пĕрне ăнланса илессишĕн тăрăшсан кăна çак ыйтăва тĕрĕс татса пама пулать.

Китай Халăх Республикин правительстьствипе Демократиллĕ Корея Халăх Республикин правительстви 1953 çулхи мартăн 30-мĕшĕнче тата 31-мĕшĕнче тыткăнри çар çыннисем çинчен тăракан пĕтĕм ыйтăва татса парасси çинчен тăратнă сĕнӳре каланă тата эпĕ кăçалхи апрелĕн 9-мĕшĕнче пĕлтернĕ принципсем тăрăх, пирĕн енĕ тыткăнри çар çыннисене репатриаци тăвасси çинчен тăракан пĕтĕм ыйтăва татса пама халĕ çакăн пек конкретлă мероприятисем сĕнет:

1. Перемири çинчен тунă килĕшӳ вăйа илнĕ хыççăн икĕ уйăх хушшинче икĕ енĕн те, нимĕнле чăрмав тумасăр, хăйсен тăван çĕршывне таврăнасшăн пулнă мĕнпур çар çыннисене ушкăнăн-ушкăнăн хăйсем пурăнакан çĕршыва тавăрса памалла. Çакна ăна перемири çинчен тунă килĕшĕвĕн виççĕмĕш статьинчи 51-мĕш параграфра каланă положенисем тăрăх тата икĕ енĕ те тĕрĕсленĕ тата пĕр-пĕриппе улăштарса илнĕ списоксем—тыткăнри çар çыннисен списокĕсем тăрăх тумалла.

2. Хăйсен тăван çĕршывне таврăнасшăн пулнă тыткăнри мĕнпур çар çыннисене репатриаци туса пĕтернĕ хыççăн пĕр уйăх хушшинче икĕ енĕн те тыткăнри ытти çар çыннисене, тӳрех репатриаци туман çар çыннисене, нейтральнăй государство аллине памалла тăвас пулать, çакăн хыççăн вĕсене вара хăйсен çар контролĕнчен хăтармалла. Хăш государствăна нейтральнăй государство тесе йышăнасси пирки пĕр-пĕринпе консультаци тунă тăрăх килĕшсе татăлмалла. Çав нейтральнăй государство влаçĕсен хăйсем палăртнă районта тыткăнри çак çар çыннисене хăйсен хӳттине илмелле. Нейтральнăй государство влаçĕсен хăйсен аллинче вăхăтлăха тăракан тыткăнри çар çыннисем тĕлĕшпе хăйсен законлă ĕçĕсене пурнăçлама право пулмалла.

3. Çак çар çыннисем нейтральнăй государствăна пырса çитсен ултă уйăх хушшинче çак çар çыннисен тăван çĕршывĕсен представителĕсене нейтральнăй государствăна пыма право тата май туса памалла. Çав представительсен тыткăнри çар çыннисем хăраса тăнине пĕтерме тăрăшмалла тата вĕсене хăйсен тăван çĕршывне таврăнассипе çыхăнса тăракан мĕнпур ыйтусем çинчен, уйрăммăн илсен, вĕсен хăйсен тăван килĕсене таврăнма, мирлĕ ĕçе тытăнма право пурри çинчен ăнлантарса памалла.

4. Çак çар çыннисем нейтральнăй государствăна пырса çитнĕ хыççăн ултă уйăх хушшинче тата çак çар çыннисен тăван çĕршывĕсем вĕсем хушшинче ăнлантару ĕçĕ туса ирттернĕ хыççăн, нейтральнăй государство влаçĕсен хăйсен тăван çĕршывне таврăнасшăн пулнă тыткăнри мĕнпур çар çыннисене хăвăртрах хăйсен тăван çĕршывне таврăнма май туса памалла. Ку тĕлĕшпе вĕсене чарса тăма нимĕнле чăрмав та пулмалла мар. Çак тыткăнри çар çыннисене репатриаци тумалли административлă ĕçсене нейтральнăй государство влаçĕсемпе çак тыткăнри çар çыннисен тăван çĕршывĕсен влаçĕсем хушшинче консультацисем тунипе йĕркелесе ямалла.

5. Çак сĕнĕвĕн 3-мĕш тата 4-мĕш параграфĕсенче палăртнă пек, ултă уйăх хушши срок иртнĕ хыççăн та нейтральнăй государство хӳттинче çаплах та тыткăнри хăшпĕр çар çыннисем юлаççĕ пулсан, вĕсен малашнехи кун-çулĕ çинчен тăракан ыйтăва консультаци тунипе татса пама ĕçе политикăлла конференцие парас пулать. Çак конференцие пухасси çинчен перемири çинчен калакан килĕшĕвĕн 4-мĕш статьинчи 60-мĕш параграфра каланă.

6. Тыткăнри çар çыннисем нейтральнăй государствăра пуранипе çыхăннă пĕтĕм расходсене, вăл шутра вĕсене тăван çĕршыва ăсатса янипе çыхăнса тăракан пĕтĕм тăкаксене тыткăнри çар çыннисен тăван çĕршывĕ пулса тăракан государствăсен хăйсем çине илмелле.

ЛОНДОН, апрелĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Паньмыньчжоньран пĕлтернĕ тăрăх, Пĕрлешнĕ нацисен главнăй делегачĕ Гаррисон паян корреспондентсене çапла пĕлтернĕ: Пĕрлешнĕ нацисем нейтральнăй государство Швейцари пулмалла тесе панă сĕнĕве Корейăпа Китай енĕ йышăнман. Перемири хыççăн хăйсен тăван çĕршывне таврăнма килĕшмен тыткăнри çар çыннисен кун-çулне татса парас ыйтăва нейтральнăй государство аллине шанса параççĕ.

ПЕКИН, апрелĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран çапла пĕлтерет:

Генерал Нам Ир паян перемири çинчен калаçма пухăннă икĕ енĕн делегацийĕсен çĕнĕрен пуçланнă малтанхи пĕрлехи ларăвне уçнă. Вăл Корейăра перемири тума кансĕрлесе тăракан пĕртен-пĕр ыйтăва—тыткăнри çар çыннисене репатриаци тăвасси çинчен тăракан пĕтĕм ыйтăва татса парас тĕлĕшпе ултă пунктран тăракан сĕнӳ кăларса тăратнă.

Паян калаçусенче генерал Нам Ир тыткăнри çар çыннисене репатриаци тăвасси çинчен тăракан ыйтăва тĕрĕс татса пама май пулнине кăтартса панă. Çак ыйтăва татса паманни халĕ Корейăра перемири тăвассине кансĕрлесе тăрать. Икĕ енĕ те мир тăвассишĕн тăрсан тата пĕр-пĕрне ăнлансан, çак ыйтăва пĕтĕмпех татса пама пулать.

Генерал Нам Ир çапла пĕлтернĕ: ултă пунктран тăракан сĕнĕве вăл Америка делегацийĕн пуçлăхĕ Гаррисон апрелĕн 19-мĕшĕнче ярса панă сырăва тĕплĕн пăхса тухнă хыççăн туса хатĕрленĕ, тенĕ. Çак конкретлă сĕнӳ, ăна пурнăçлас пулсан, перемири çинчен пыракан калаçусенче татса памасăр юлнă пĕртен-пĕр ыйтăва, тыткăнри çар çыннисене репатриаци тăвасси çинчен тăракан ыйтăва, татса пама май парать. Çапла вара ăна татса пани Корейăра перемири тăвасси патне илсе пырать, тенĕ вăл.

Сĕнӳри тĕп вырăнсенчен пĕри вăл мĕнле государствăна нейтральнăй государство вырăнне йышăнасси çинчен консультацисем ирттернипе калаçса татăлмаллине кăтартса паракан пункт пулать. Анчах та Америкăн главнăй делегачĕ Гаррисон: çакăн пек нейтральнăй государство Швейцари пулмалла, тенĕ. Генерал Нам Ир паян çакна кăтартса панă: Швейцари кандидатури пачах та килĕшмест, мĕншĕн тесен Швейцари Америка делегачĕсем тăвать нейтральнăй государство представителĕсенчен тăвакан, перемири условийĕсене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесе тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссие кĕртме сĕннĕ икĕ государствăран пĕри пулса тăрать.

Генерал Нам Ир çапла каланă: тыткăнри çар çыннисем çинчен тăракан ыйтăва практикăлла майпа татса пама, çак ыйтăва татса пама икĕ енĕ те чĕререн тăрăшас пулсан, нимĕнле йывăрлăхсем те пулмаççĕ. Вăл Гаррисон çитес ларăва апрелĕн 27-мĕшĕнче ирхине 11 сехетре пухма сĕннипе килĕшнĕ тата вăл хăйĕн ултă пунктран тăракан сĕнĕвне кирлĕ пек тĕпчесе вĕренессе шанса тăни çинчен каланă.

Корейăра тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене улăштарса илни

ПЕКИН, апрелĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран пĕлтернĕ тăрăх, Корейăпа Китай делегацийĕ паян çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă:

Апрелĕн 25-мĕшĕнче икĕ енĕ те тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене Паньмыньчжоньра улăштарса илнĕ. Пирĕн енĕ пĕтĕмпе 100 çын тавăрса панă. Вăл шутра кореецсем—75, американецсем—17, акăлчансем—4, туроксем—4 çын.

Тепĕр енĕ пире халăх çарĕн тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене 500 çын тавăрса панă.

ПЕКИН, апрелĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран çапла пĕлтерет:

Корейăпа Китай енĕ паян Америка енне тыткăнри çар çыннисене тавăрса панă. Вăл шутра американецсем—17, акăлчансем—4, туроксем—4 тата кореецсем—75 çын.

Апрелĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа Корейăпа Китай енĕ Америка енне кореец мар çар çыннисене 200 çын тата кореецсене 400 çын тавăрса панă.

Паян Америка енĕ Корейăпа Китай енне Корея Халăх çарĕн çыннисене 500 çын тавăрса панă. Вĕсенчен 25 çын психика чирĕпе чирленĕ çынсем. Американецсем пĕлтернĕ тăрăх, ыран вĕсем психикăпа чирленĕ тата 50 çын тавăрса параççĕ. Психика чирĕпе чирлисем çакăн пек нумай пулни вăйпа суйласа илме тăрăшнинчен тата Кочжедо утравĕ çинче çар çыннисене хытă хĕсĕрлениннчен килнĕ пулмалла. Корея Халăх çарĕн тыткăнра пулнă чирлĕ тата аманнă çар çыннисем çапла пĕлтернĕ: американецсем Корейăпа Китайăн тыткăнри çар çыннисене апрелĕн 22-мĕшĕнчен пуçласа темиçе хутчен ухтарнă.

ЛОНДОН, апрелĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Паньмыньчжоньран пĕлтернĕ тăрăх, Британи империйĕн Японипе Корейăри хĕçпăшаллă вăйĕсен командующийĕ генерал-лейтенант Генри Уэлс паян çапла каланă: Англин тыткăнра пулнă çар çыннисем хăйсене начар пăхнăшăн Корейăпа Китай енне айăплаççĕ, тени тĕрĕс мар.

ПАРИЖ, апрелĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентствин корреспонденчĕ Паньмыньчжоньран пĕлтернĕ тăрăх, Корейăпа Китай енĕ паян Пĕрлешнĕ нацисен çарĕн командованине хăйсем енчен тыткăнри чирлĕ тата аманнă çыннисене репатриаци туса пĕтерни çинчен пĕлтернĕ.

Çичĕ кун хушшинче Корейăпа Китай енĕ Пĕрлешнĕ нацисен çарĕсен тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене 684 çын тавăрса панă.

Пĕрлешнĕ нацисен çарĕсен командованийĕ ыран Сурçĕр Корея çыннисене тата 500 çын тавăрса парасси çинчен пĕлтернĕ.

ЛОНДОН, апрелĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Англире тухса тăракан хаçатсем Америка хаçачĕсем, Пĕрлешнĕ нацисен çарĕсен тыткăна лекнĕ çар çыннисене тискеррĕн тыткаланă тесе, суйса сырнă пирки питех те пăшăрханаççĕ. Çакă вăл Корейăра мир тăвассине кансĕрлеме пултарать, тесе сыраççĕ. «Тискерлĕх çинчен юмах çаптарма юратакансем, — тесе сырать «Рейнольдс ньюс» хаçат,—этемлĕхе начар пулăшу параççĕ». «Тыткăнри çыннисене тавăрса панипе усă курса, сивĕ вăрçă тĕлĕшпе пропаганда туma хăтланни вăл чи ирсĕр ĕç пулать», тесе сырать «Санди пикториэл» ятлă хаçат.

«Санди пикториэл» хаçатăн Корейăри корреспонденчĕ Джон Уолтерс тыткăнран каялла таврăннă Англи çар çыннисемпе хăй калаçни çинчен сырать. Анчах вĕсенчен пĕри те, тет вăл, «хăрушлăх çинчен каласа панисене» çирĕплетме пултаракан фактсем çинчен каламарĕç.

ПХЕНЬЯН, апрелĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Корейăри тĕп телеграф агентстви паян хăйĕн корреспонденчĕ Паньмыньчжоньран пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă: Америка енĕ тавăрса панă 550 çар çыннине малтанлăха медицина енĕпе тĕрĕслесе пăхни çинчен кăтартса парать: çак хисепрен 221 çын—инвалидсем. Вĕсенчен 189 çын хăйсене начар сыватнă пирки е Кăнтăр Корейăри çар çыннисен лагерĕсенче нимĕн чухлĕ те сыватман пирки инвалида тухнă. Тĕрĕслесе пăхнă 191 çынтан 109 çын туберкулез чирĕпе чирлени палăрнă. Туберкулез чирĕпе чирлесси апат çителĕксĕр пулнинчен тата вĕсене лагерьсенче йывăр ĕçлеттернинчен килнĕ.

ПЕКИН, апрелĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран çапла пĕлтерет:

Корейăпа Китай делегацийĕ паян çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă:

Апрелĕн 26-мĕшĕнче Корейăпа Китай енĕ Паньмыньчжоньра тыткăнри чирлĕ тата аманнă 84 çар çыннине тавăрса панă. Вĕсенчен кореецсем—71 çын, американецсем—13 çын. Хальхи вăхăт тĕлне лагерьсенче тата фронтри госпитальсенче пулнă тыткăнри чирлĕ тата аманнă 684 çынна пурне те Корейăпа Китай енĕ каялла тавăрса парса пĕтернĕ.

Тыткăнри аманнă тата чирлĕ çар çыннисене тавăрса парассине тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене вăрçă ĕçĕсем пынă вăхăтра тавăрса парасси çинчен 1949 çулта Женевăра йышăннă конвенцин 109-мĕш статьи тăрăх тата Паньмыньчжоньра 1953 çулхи апрелĕн 11-мĕшĕнче икĕ енĕ алă пусса йышăннă «Тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене репатриаци тăвасси çинчен калакан килĕшӳ» тăрăх туса ирттернĕ. Каялла тавăрса панă çар çыннисем хушшинче кореецсем 471 çын, американецсем—149, акăлчансем—32, туроксем—15, колумбиецсем—6, австралиецсем—5, канадецсем—2, африканец—1, голландец—1, филиппинец—1 тата грек—1 çын.

Паян тепĕр енĕ Корея Халăх çарĕн тыткăнри 497 чирлĕ тата аманнă çар çыннисене тавăрса панă.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, апрелĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче фронтсенче çулăпусем пулман.

Самолетсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн 3 самолетне персе ӳкернĕ.

ПХЕНЬЯН, апрелĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче фронтсенче уйрăм ушăнусемех пулман.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç кĕрешекен салтакĕсем паян тăшманăн 4 самолетне персе ӳкернĕ.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ КОРЕЙĂРИ МИРЛĔ ХУЛАСЕМПЕ ЯЛСЕМ ÇИНЕ ÇАПЛАХ ТАПĂНАТЬ

ПХЕНЬЯН, апрелĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Апрелĕн 25-мĕшĕнче çĕрле Америка бомбардировщикĕсем Пхеньян сывăхĕнчи районсем çине тапăннă. Америка самолечĕсем Тэдон уездĕнчи Енсон ялĕ çине бомбăсем пăрахнă. Мирлĕ халăх хушшинче вилнисемпе аманчисем пур. Çуртсене ишĕлтернĕ, хресченсен хуçалăхне пысăк сиен кӳнĕ.

Çак çĕрех Америка истребителĕсем Пхеньянри мирлĕ халăх пурăнакан кварталсем çине тапăннă, мирлĕ халăх пурăнакан çуртсем çине пулеметсенчен пенĕ. Вилнисемпе аманнисем пур.

ПАТЕТ-ЛАОРИ ЛАРУ-ТĂРУ

ЛОНДОН, апрелĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Франс Пресс агентствин корреспонденчĕ Ханойран пĕлтернĕ тăрăх, «вьетмин çарĕсем (агентство Патет-Лао çĕршывĕн ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен халăх çарне çапла калать. Патет-Лао Индо-Китая кĕрекен висĕ государствăран пĕри. Ăна халиччен Лаос тесе тĕрĕс мар каланă.—Ред.). Кăкшăм тӳремлĕхĕ текен вырăнта Франци позицийĕсене пĕтĕмпех хупăрласа илнĕ. Кăкшăм тӳремлĕхĕ — Францин тĕп оборона центрĕ пулса тăрать. Вăл—вьетмин çарĕсем Лаос патне пыракан çул çинче. Корреспондент кăтартса панă тăрăх, вьетмин колоннисем Лаос столици Луан-Прабан патне кăнтăр еннелле наступлени туса пыраççĕ пулмалла. Шанчăклă çынсем пĕлтернĕ тăрăх, Франци правительстви Франци çарĕсем Луан-Прабана тытса тăма пултарас пирки питех те шикленсе ӳкнĕ».

СИДНЕЙ, апрелĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Вьетнамри информаци агентстви çапла пĕлтернĕ: нумаях пулмасть Патет-Лао государствин ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен халăх çарĕ Францин оккупаци çарĕсене хирĕç пысăк наступлени пуçласа янă. Вăл апрелĕн 13-мĕшĕнче Сам-Меа хулине ирĕке кăларнă. Çакăн хыççăн, тесе пĕлтерет агентство, пĕтĕм Сам-Меа провинцине ирĕке кăларнă, апрелĕн 18-мĕшĕнче Бан-Бан хулине ирĕке кăларнă. Апрелĕн 19-мĕшĕнче Патет-Лао государствин ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен халăх çарĕ Сиенг-Куанг текен пысăк хулана пырса кĕнĕ.

* * *

1945 çулхи октябрь уйăхĕнче Патет-Лаора вăхăтлăх центральнăй халăх правительстви туса хунă тата çĕршывăн никама пăхăнманлăхĕ çинчен пĕлтернĕ. 1946 çулхи март уйăхĕнче Патет-Лао территорине Франци çарĕсем тепĕр хут оккупациленĕ. Патет-Лао халăхĕ Франци çарĕсене хирĕç кĕрешĕве çĕкленнĕ. Вăл ирĕклĕхшĕн кĕрешекен халăх çарĕ туса хунă. Çак çар французсене çĕршыври чылай районсенчен хăваласа кăларнă. Демократиллĕ хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, 1950 çулхи август уйăхĕнче Патет-Лаон Наци пухăвне туса хунă тата Франци пусмăрне хирĕç кĕрешекен правительство суйласа лартнă.

ЛОНДОН, апрелĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Парижран çапла пĕлтерет:

Вьетминăн 4 батальонĕ (агентство Патет Лаон ирĕклĕхшĕн кĕрешекен халăх çарне çапла калать:—Ред.) кăнтăр еннелле король пурăнакан Луан-Прабан хули патне наступлени туса пырать. Франци летчикĕсем Муонг-Нгой постне вут хыпса илнине курни çинчен пĕлтереççĕ. Çак пост гарнизонĕнчен нимĕнле хыпар та çук.

Франс Пресс агентстви çапла пĕлтернĕ: Лаос правительстви хăрушлăх килсе тухас мĕн пулсан Лаосăн административлă столицинчен — Вьен-Тяньран самолетсемпе вĕçсе тухса кайма хатĕрленет. Восстание çĕкленĕ колоннăсенчен пĕри хальхи вăхăтра Кăкшăм тӳремлĕхĕнчи Франци позицийĕсене хупăрласа илнĕ.

Вăйлă çумăрсем пулнă пирки французсен Кăкшăм тӳремлĕхĕнчи тĕп аэродромĕ шыв айне пулнă. Хупăрласа илнĕ çарсене çак аэродромран апат-çимĕçпе çар хатĕрĕсем парса тăнă пулнă.

АЛБАНИРЕ ГРЕЦИ ШПИОНĔСЕНЕ СУД ТУНĂ

ТИРАНА, апрелĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Дельвин хулинче Греци разведкин службинче тăнă шпионсен ушкăнне суд туса пĕтернĕ. Айăпланакан пĕр тăван Кенутисем çар, экономика, политика енĕпе вăрттăн информацисем пухса Греци разведкине парса тăнă, халăх влаçне хирĕç сăтăрла пропаганда сарнă. Айăпланакансем пурте хăйсен айăпĕсене йышăннă.

Суд Сотира Кенутипе Спиро Кенутие персе пăрахмалла, Васил Кенутие вунă çуллăха хупса лартмалла тунă.

Çуллахи спорт сезонĕ пуçланчĕ

Апрелĕн 26-мĕшĕ Шупашкарти физкультурниксемпе физкультурницăсемшĕн хаваслă пулчĕ. Хулара çуллахи спорт сезонĕ уçăлчĕ. Ирхине 10 сехет иртсенех Атăл хĕрринчи К. Иванов ячĕпе тăракан сад патне ĕçсыннисем пухăнма тытăнчĕç.

11 сехет. Çуллахи спорт сезонĕ уçăлнă ятпа ирттерекен эстафетăллă чупу пуçланасси çинчен пĕлтерчĕç. Физкультурниксем йĕркипе тăрса тухаççĕ. Чи малтан хĕрачасем ăмăртса чупрĕç. Пĕри сад йĕритавра чупса çаврăнса эстафетăна тепĕр физкультурницăна парать. Кашниех мала тухассишĕн, лайăх тĕслĕхсем кăтартассишĕн тăрăшать.

Шкулсем енĕпе пынă ăмăртура 7-мĕш номерлĕ вăтам шкул коллективĕ пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Ку шкулти хĕрачасен команди эстафетăна 3 минут та 40,7 секунд хушшинче вĕçлерĕ. Иккĕмĕш вырăна 11-мĕш вăтам шкул команди тухрĕ. Унăн вăхăчĕ — 3 минут та 44,6 секунд.

Арçын ачасенчен 2-мĕш вăтам шкул команди çĕнтерчĕ. Команда эстафетăна 2 минут та 54,6 секундра чупса тухрĕ. 4-мĕш номерлĕ вăтам шкулти физкультурниксем иккĕмĕш вырăн йышăнчĕç.

Хĕрарăмсен командисенчен «Красный кустарь» артельри физкультурницăсем лайăх тĕслĕх кăтартрĕç. Команда вăхăчĕ—7 минут та 44,3 секунд.

Ăмăрту ирттерекен судья педагогика институчĕн командин старта тухмалли çинчен пĕлтерет.

Курма пынисем спортсменсем мĕнле ăмăртса чупнине питех те интересленсе пăхрĕç.

... Акă пĕр спортсмен чупса килет.

— 39-мĕш номер! Педагогика институчĕн представителĕ, — теççĕ курма пынă çынсем.

— Юрий Плотников! — Иртнĕ çулта вăл чупас енĕпе республика рекордне лайăхлатнăччĕ...

Пединститут команди пĕррĕмĕш вырăна тухрĕ. Унăн вăхăчĕ — 18 минут та 47,8 секунд. Иккĕмĕш вырăна ялхуçалăх институчĕн команди йышăнчĕ. Педагогика институчĕн тепĕр команди те лайăх тĕслĕх кăтартрĕ.

Физкультура организацийĕсен арçынсен командисем енĕпе «Динамо» спорт обществин иккĕмĕш команди мала тухрĕ.

УКЕРЧĔКСЕМ ÇИНЧЕ: çӳлте — ăмăртăва хутшăннă хĕрачасем Аптечнăй урамра; аялта—Шупашкарти педагогика институчĕн арçынсен команди. Вăл ăмăртура мала тухнă. Командăра педагогика институчĕн студенчĕсем (сулахайран сылтăмалла)—Н. Ларионов, Э. Ильин, М. Яковлев, П. Алексеев тата В. Ахмеев.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕсем.

Хулари паркра

Шупашкарти Крупская ячĕпе тăракан парк—хулари ĕçсыннисен юратнă вырăнĕ. Парка Майăн 1-мĕшĕнче уçаççĕ. Парка тасатнă, юсав ĕçĕсене туса пĕтернĕ, эстрадăпа трибунăна, ташă площадкине сăрланă, парк картине тата павильона сăрлаççĕ.

Иртнĕ çулсенче кунта сутă çителĕклĕ пулман. Кăçал 70 лампочка таран çакса тухма палăртнă.

Паркра волейбол площадки тăваççĕ. Спорт инвентарĕ çителĕклĕ туянна.

Хулари Досааф оргкомитечĕ, пир-авăр комбиначĕпе электроаппаратура заводĕ çĕнĕ стэндсем туса лартаççĕ.

Парк уçăлсан павильонра республикăри М. Горький ячĕпе тăракан библиотека филиалĕ ĕçлеме пуçлать. Кунтах шашка-шахмат тата ытти вăйăсем те пулаççĕ.

Майăн 2-мĕшĕнче паркра хулари ачасен утренникне ирттереççĕ. Унта шкулсемпе предприятисенчи пионерсемпе шкул ачисем хăйсен пултарулăхне кăтартса параççĕ. Каçхине чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕ концерт парать.

Выляв укçи илеççĕ

ОКТЯБРЬСКИ. Районти ĕçсыннисем государство заемĕсене çулсеренех пысăк активлăхпа çырăнса илеççĕ. Иртнĕ çулта СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государство заемне (1952 çулхи кăларăм) районта 1.642 пин тенкĕлĕх çырăнса илнĕ.

Ĕçсыннисем заем облигацийĕсем тăрăх выляв укçи нумай илеççĕ. 1950 çулта районти перекет касси выляв укçи 200 пин тенкĕ тӳленĕ пулсан, 1952 çулта 343.471 тенкĕ тӳленĕ. Кăçал ĕçсыннисем висĕ уйăх хушшинче 136.580 тенкĕ выляса илнĕ. Молотов ячĕпе тăракан колхозри Е. Михайлова колхозницăн облигацийĕ çине 10 пин тенкĕ выляв укçи тухнă.

Государствăн 3 процентлă шалти заемĕн облигацийĕсене илекенсен йышĕ ӳссех пырать. Перекет касси пĕрремĕш кварталта заем облигацийĕсем сутмалли плана 172 процент тултарчĕ.

В. ТРОФИМОВ.

Тимĕр-тăмăр пухаççĕ

СĔНТĔР. Урпашри вăтам шкулта тата Ильинкăри çичĕ çул вĕренмелли шкулта вĕренекенсем тимĕр-тăмăр пухса парса, çĕршыва пысăк усă кӳреççĕ.

Ильинкăри шкулта вĕренекенсем кĕске вăхăтрах 603 килограмм тимĕр-тăмăр пухса панă. Çак ĕçре комсомолецсемпе пионерсем лайăх тĕслĕх кăтартрĕç.

Шкулта тимĕр-тăмăр пухас ĕçе ертсе пыма ятарласа комисси тунă. Ăна ВЛКСМ райкомĕн членĕ Н. Н. Расторгуева учительница ертсе пырать.

Урпашри вăтам шкулта вĕренекенсем те, М. Аргандеева юлташ ертсе пынипе, пĕр кунта 300 килограмм ытла тимĕр-тăмăр пухнă.

А. КАХОВСКИЙ.

Шкулти радиокружок

КӲКЕÇ. Сĕнъялти çичĕ çул вĕренмелли шкулта радиокружок ĕçлет. Унта 25 ача вĕренет. Кружокра вĕренекен чылай ачасем детекторлă радиоприемниксем туma вĕренсе çитрĕç.

В. НИКИТИН.

Атăл çинче

Кăçал çуркунне Атăл шывĕ Шупашкар тĕлĕнче пурĕ 6 метр та 80 сантиметр хушăннă. Пĕлтĕр çуркунне шыв 7 метр та 24 сантиметра çити хушăннă.

Апрелĕн 26-мĕшĕнче Атăл шывĕ чакма пуçланă. Малтанхи кун 1 сантиметр, апрелĕн 27-мĕшĕнче 4 сантиметр чакнă.

Ĕнер ирхине 8 сехет тĕлне шывра 9,3 градус ăшă пулнă.

Атăл урлă грузсем тата пассажирсем илсе çӳрекен «20 лет ЧАССР» самоход апрелĕн 26-мĕшĕнче ĕçе тытăнчĕ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ—апрелĕн 28-мĕшĕнче вырăсла спектакль «Дама-невидимка». Пуçламăшĕ 20 сехетре.

КИНО

«РОДИНА»—апрелĕн 28-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче «Крейсер Варяг», 16 сехетре, 18 сехет те 15 минутра, 20 тата 22 сехетре пуçланакан сеанссенче çĕнĕ илемлĕ фильм «Возвращение Василия Бортникова».

«УДАРНИК» — апрелĕн 28-мĕшĕнче «Сердца четырех».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01368 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.